М54
Ч-40042



# А.И. Мефодьев

# ФАКУЛЬТЕТ - ПИРЁН КИЛ

Национальная библиотека ЧР
4-040042

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
БЕСПЛАТНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

Раççей Федерацийĕн вĕрентӳпе ăслăлăх министерстви
Аслă професси пĕлĕвĕ паракан патшалăх вĕренӳ учрежденийĕ
«И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕ»

*А.И. Мефодьев*

# *ФАКУЛЬТЕТ – ПИРĔН КИЛ*

*Чăваш филологи факультечĕн кун-çулĕнчен*

Шупашкар – 2005

ББК 74.583 (2Рос.Чув)
М 549

*«И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕ» аслă професси пĕлĕвĕ паракан патшалăх вĕрентӳ учрежденийĕн ăслăлăх канашĕ пичете сĕннĕ*

Редакторĕ – филологи наукисен кандидачĕ,
А.Е. Горшков доцент

ПРОВЕРЕНО
20 10

**МЕФОДЬЕВ А.И.**

Факультет – пирĕн кил. – Шупашкар: Аслă професси пĕлĕвĕ паракан патшалăх вĕрентӳ учрежденийĕ «И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕ», 2005. – 72 с.

4-40042
Национальная библиотека
Чувашской
Республики

© Мефодьев А.И., 2005

© Аслă професси пĕлĕвĕ паракан патшалăх вĕрентӳ учрежденийĕ «И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕ», 2005

# Салам, факультетăмăр!

## И.Я. Яковлев ячĕллĕ ЧППУ чăваш филологи факультечĕн гимнĕ

Кĕвви Вилорик Романовăн
Сăвви Сантăр Аксарăн

Чăваш сăмахлăх факультечĕ,
Эс – пирĕн ăраскал, тĕнче,
Тăван çĕр-шывăмăр тивлечĕ,
Пурнан студент чун-чĕринче.

Хушса юрламалли:

Пире эс патăн ăс та пил.
Салам, сана, юратнă кил!
Ут паттăр ĕмĕрсем хушши,
Эс пирĕн шанчăк, чун ăшши




Яковлева паян кам манĕ, –
Асрах тытатăн пехилне.
Калатăн çамрăка:"Аван-и?",
Чĕнетĕн çутлăх тĕнчине.

Сан ачусем куллен илеççĕ
Пĕлӳ те пиçĕхӳ, илем.
Чи вăйлисем çӳле вĕçеççĕ,
Ăс-хал хакне туять этем.

Мухтавлă вĕренӳ çăлкуçĕ,
Сан хăватна чăваш сисет.
Хавхалантар мала каюçăн
Ăна эс, савнă факультет!

# Вăтăрмĕш çулсем: савăнăç та, куççуль те

1930 çул. Юпа уйăхĕн пĕрремĕшĕнчи илĕртӳллĕ ир... Шупашкар варринчи Карл Маркс урамĕнчи икĕ хутлă хăтлă кермен патнелле пур енчен те çамрăксем хыпаланса утаççĕ. Пĕрисем портфель-сумка йăтнă, теприсем хул хушшине папка тавраш хĕстернĕ. Кусем – тин çеç уçăлнă педагогика институчĕн студенчĕсем. Вĕрентӳ çуртне васкаççĕ. Пурте хăйсем йăл-йăл çиçеççĕ, çĕкленӳллĕ, хĕпĕртӳллĕ. Çанталăкĕ те паян кăмăллăрах пек, хĕвеллĕ, йăлтăркка. Вăл та яш-кĕрĕме савса саламланăн туйăнать. Чăваш каччисемпе хĕрĕсем тĕп хуламăрта пуçласа аслă шкул алăкне уçаççĕ, пысăк пӳлĕме кĕрсе вырнаçса ларaççĕ. Кĕçех вĕренекенсемпе вĕрентекенсен пĕрлехи савăнăçлă пухăвĕ пуçланать. Институт ертӳçи Ефрем Семенович Чернов сăмах калать, студентсене çак паллă кун ячĕпе хĕрӳллĕн саламалать, тăрăшса вĕренме ырă сунать.

Ку вăл – Чăваш патшалăх педагогика институчĕ çуралнă кун. Ку вăл – обществăпа литература тата физикăпа техника уйрăмĕсенче ытти тĕрлĕ специальноçсемпе пĕрле аслă пĕлӳллĕ чăваш чĕлхеçисемпе сăмахçисене те хатĕрлеме пуçланă сăвапла самант.

Унтанпа 75 çул иртрĕ. Çак хушăра Шупашкарти малтанхи аслă шкулпа пĕрле унти чăваш уйрăмĕ те пархатарлă та кăткăс çул утса тухрĕ. Хамăр халăхпа, тăван республикăпа яланах юнашар пулчĕ вăл, вĕсемпе пĕр шухăш-туйăмпа пурăнчĕ, пĕр сывлăшпа сывларĕ, саманапа, вăхăтпа тан пыма тăрăшрĕ. Çитмĕл пилĕк çул хушшинче чăваш уйрăмĕ чăвашлăха аталантарма вышкайсăр пысăк вăй хучĕ, çамрăк ăрава аслă пĕлӳ тăвĕ çине çĕкленме хастарлăн пулăшса пычĕ.

Каярахпа уйрăм факультет шайне çити çĕкленнĕ çак вĕренӳ тытăмĕн кун-çулĕнче педагог-ăсчахсемпе студентсен малтанхи ăрăвĕн тӳпи уйрăмах пысăк. Институтра чăвашлăх ĕçне туса пынă, тăван чĕлхепе литература кафедрине тата уйрăмне йĕркелеме тата ертсе пыма хутшăннă çынсем умĕнче паян эпир пуçăмăра таятпăр. Çак йышăн малти ĕретĕнче тăракансенчен пĕри вăл Емельян Захарович Захаров пулнă. Литература тавралăхĕнчи

ĕҫченсем ăна ытларах Мадсн ятпа пĕлеҫҫĕ. Акă, институт директорĕн Е.С. Черновăн 11-мĕш хушăвĕ. Ун тăрăх Емельян Захаровича, вăтăр ҫиччĕри пултаруллă литература тĕпчевҫине тата ҫыравҫăна, И.Я. Яковлевăн маттур вĕренекенне, ҫурла уйăхĕн 25-мĕшĕнче директорăн пулăшуҫине, ҫав вăхăтрах литературăна вĕрентекен доцента лартаҫҫĕ. Вĕренӳ ҫулĕ пуҫланасси уйăх та ытла-ха. Ҫак хушăра Е.З. Захаров ырми-канми ĕҫлет: яшсемпе хĕрсене аслă шкула йыхравлать, вĕсем валли кĕнекесемпе ытти кирлĕ япаласем хатĕрлет, вĕренӳ планне майлаштарать, педагогсем шырать. Тепĕр ҫур уйăхран пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕ тата чăваш чĕлхи енĕпе доцент пулма Тимофей Матвеевич Матвеева йышăнаҫҫĕ. Вăл унччен ĕнтĕ республикăри чĕлхеҫĕсем хушшинче ят-сум илме ĕлкĕрнĕ, паха тĕпчевĕсемпе палăрнă. Ҫамрăк чух Т.М. Матвеев, Е.З. Захаров пекех, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче пиҫĕхӳ туяннă. Аслă асаттемĕр Иван Яковлевич пилленĕ пĕлӳ ҫулĕ ҫинче вĕсем иккĕшĕ те пĕр самантлăха та чарăнса тăман. Хăйсенче мĕн пуррине, мĕн пахине ҫамрăксене халалланă. Ҫынсене те ӳстернĕ, ҫавна май хăйсем те ӳснĕ, ăслăлăхпа пĕлӳ тĕнчине ăнтăлнă. Ăсталăхĕ туптанса пынине кура иккĕшне те яваплăрах ĕҫсем шана-шана панă. 1931 ҫулхи авăн уйăхĕнче Т.М. Матвеева чĕлхепе литература кафедрин ертӳҫне лартнă, профессор тивĕҫне пурнăҫлама шаннă. Е.З. Захаров вара чăваш литературисĕр пуҫне чикĕ леш ен литературине, хамăр ҫĕршыври халăхсен литературине тата нимĕҫ чĕлхине вĕрентме пуҫланă. 1933 ҫулхи пуш уйăхĕн 1-мĕшĕнче вăл чĕлхе пĕлĕвĕпе литература кафедрин пуҫлăхĕнче ĕҫлеме тытăннă. Т.М. Матвеева вара чĕлхепе литература уйрăмĕн ертӳҫи туса хунă. Емельян Захаровичпа Тимофей Матвеевич вăхăта хĕрхенмесĕр, сывлăха шеллемесĕр тăрăшнă, студентсене лайăх вĕренме пулăшнипе пĕрлех ăслăлăхпа пултарулăх ĕҫне тума та хавхалантарса пынă. Ахальтен-и дирекци малтанхи виҫĕ ҫулшăн тунă отчетра вĕсен ĕҫне пысăка хурса хакланă. Т.М. Матвеева чи лайăх вĕрентӳҫĕсен шутне кĕртнĕ. Вăл «уроксене пысăк пахалăхпа ирттернине, чăвашла вĕрентесси ҫине куҫма хатĕрленес тĕлĕшпе пысăк тимлĕх кăтартнине, ҫавăнпа пĕрлех чăваш чĕлхи историйĕпе диалектологийĕ енĕпе

ăслăлăхпа тĕпчев ĕçĕсене анлăн туса пынине» палăртнă. Т.М. Матвеевпа Е.З. Захаров профессорсем шкулсем валли кĕнекесем хатĕрлес тĕлĕшпе нумай вăй хунине кăтартса хăварнă.

Малтанхи çулсенчех институт библиотеки чăваш халăхĕн кун-çулĕпе, чĕлхипе тата ӳнерĕпе çыхăннă кĕнекесемпе пуянланать. Хусанти Хĕвел Тухăç педагогика институтĕнчи чăваш чĕлхипе литератури уйрăмĕ Чăваш педагогика институтне куçнă май унти чăваш ĕçĕн пӳлĕмне тата 17 тĕркерен тăракан архивне, 2 пин вĕренӳ кĕнекине, В.Магницкий историкăн 20 томран тăракан тата Чĕмпĕрти унччехни чăваш вĕрентӳçисен шкулĕн 16 томран тăракан архивĕсене Шупашкара куçараççĕ. Çакна Хусанти Хĕвел Тухăç пединститучĕн сынни Г.И. Комиссаров тата Чăваш пединститучĕн ĕçченĕ Т.Г. Григорьев 1931 çулхи çурла уйăхĕн 17-24-мĕшĕсенче хут тутарса, алă пусса çирĕплетеççĕ.

Чăваш студенчĕсем институт уçăлнă кунтан пуçласах хăйсен ĕçченлĕхĕпе тата пуçарулăхĕпе палăраççĕ. Педагогсене уйрăмах пĕрремĕш çулах вĕренме кĕнĕ М.Я. Сироткин, Т.П. Парамонов, Н.И. Колюшкин, А.В. Васильев, А.С. Долгов хăйсен тăрăшулăхĕпе савăнтараççĕ. М.Я. Сироткинпа Т.П. Парамонов вĕренӳре лайăх ĕлкĕрсе пынăшăн тата пултарулăх енĕпе çитĕнӳ тунăшăн М.Горький ячĕллĕ стипенди илсе тăраççĕ. Т.П. Парамоновпа Н.И. Колюшкин тата А.С. Долгов предмет пӳлĕмĕсен ертӳçисен тивĕçне пурнăçласа пыраççĕ.

Пирвайхи студентсем пуçарнипе институтра литература кружокĕ чăмăртанать. Унăн ĕçне Филипп Александров, Александр Васильев, Николай Колюшкин (Чурпай), Михаил Сироткин (Сириус) хастар хутшăнаççĕ. Староста тивĕçне Михаил Сириус пурнăçласа пырать. Кружокĕпе хаçатне «Шурăмпуç» ят параççĕ. Çыруçипе редакторне Филипп Александровпа Николай Чурпая лартаççĕ. Сăвăпа тĕрленчĕк çамрăк çыравçăсен юратнă жанрĕсем пулса тăраççĕ. Кружокçăсем таврари ялсене тăтăшах тухса çӳреççĕ, ял ĕçченĕсемпе, шкул ачисемпе тĕл пулаççĕ, вĕсене хăйсен хайлавĕсемпе паллаштараççĕ, юрă-ташăпа савăнтараççĕ, хамăр тăрăхра колхоз юхăмне сарма пулăшаççĕ. Сăмахран, пединститут директорĕн 1931 çулхи



Акă вĕсем – пĕрремĕш кăларăмрисем: (сулахайран сылтăмалла) 1-мĕш ретре – Сироткин Михаил Яковлевич, Васильев Александр Васильевич, Степанов Федор Адрианович; 2-мĕш ретре – Краснов Александр Тихонович, Кушников Никифор Данилович, Беззубов Кузьма, Кириллов Алексей Кириллович. 1931 çулхи раштав уйăхĕ.

пуш уйăхĕн 6-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе Н.Колюшкина студентсемпе пĕрле Канаш тăрăхне ĕçпе яраççĕ. Унта вăл хăйĕн ушкăнĕнче информатор тивĕçне пурнăçласа пырать. Икĕ уйăх хушши хресченсене ял хуçалăх ĕçĕсене тума пулăшать, колхозсем йĕркелеме тимлĕн хутшăнать. Çакнашкал командировкăна М.Сироткин та пĕрре мар кайса килет. Кружокçăсем республикăри хаçат-журналпа тачă çыхăну тытаççĕ, куçару ĕçне туса пыраççĕ, шкул кĕнекисем хатĕрлеççĕ. Тĕслĕхрен, А.Васильевпа А.Долгов 1932 çулта 3-4-мĕш классем валли «Географи» ятлă кĕнеке кăлараççĕ. А.Васильев çавăн пекех Т.Парамоновпа пĕрле хăнăхтару материалĕсене пухас енĕпе тимлĕ ĕçлет. Вĕсен кĕнеки 1933 çулта пичетленсе тухать. 1932 çулта М.Сироткинпа Н.Колюшкинăн 160 страницăллă вĕренӳ кĕнеки кун çути курать. Унăн ячĕ – «Колхоз çамрăкĕсен шкулĕсенчи III группăра вĕренмелли географи». Вĕреннĕ вăхăтра çавăн пекех Т.Парамоновпа Ф.Кузьмин пĕрер кĕнеке кăлараççĕ. Унсăр пуçне

Н.Колюшкин «Капкăн» журналта калав хыççăн калав пичетлет.

Çулсем иртнĕçемĕн литература кружокĕ çĕнĕрен вĕренме кĕрекен пултаруллă студентсен шучĕпе вăй илсе пырать. 1932 çулта унта пединститута вĕренме кĕнĕ Н.Ильбеков (Илпек Микулайĕ) çӳреме пуçлать. Çак çулсенче вăл хайĕн пултарулăхĕнче малтанхи утăмсем тăвать, пĕчĕк калавсем çырса палăрать. Нумай çул иртнĕ хыççăн вăл çапла аса илет: «Ытла пысăках марччĕ литкружок, пурĕ те 8-9 çын килнĕччĕ. Эпир чăваш писателĕсем çырнă сăвăсене, калавсене тишкереттĕмĕр. Литература каçĕсем ирттерме хавасчĕ. Кружок ĕçне Борис Резюков (Николай Резюков чĕлхеçĕ шăллĕ) питĕ хастар хутшăнатчĕ...».

1934 çулта пединститута А.Бачков (Алка) тата М.Кудрявцев (Кăтра Мишша) вĕренме кĕреççĕ, литература кружокĕн ĕçне çĕнĕ шая çĕкленме пулăшаççĕ. Александр Алка унта староста, Кăтра Мишша çыруçă тивĕçĕсене пурнăçласа пыраççĕ. Çамрăк авторсем ларусенче хайсен сăвви-калавне, çавăн пекех Александр Кăлканăн, Уйăп Мишшин, Василий Васькинăн тата ытти чăваш çыравçисен хайлавĕсене сӳтсе яваççĕ.

Вăрçă умĕнхи тапхăрта пединститутра чăваш ӳнерĕн пулас паллă ĕçченĕсем С.П. Юшков (1935-1938), Н.С. Дедушкин (1936-1940), А.И. Терентьев (1937-1941) тата ыттисем те вĕренеççĕ, литкружок хастарĕсен ĕретне тăраççĕ. Вĕсем аса илнĕ тăрăх, ун чухне чăвашсен пĕрремĕш аслă шкулĕнче литература ĕçĕ вĕресе кăна тăнă. Н.С. Дедушкин (Николай Аслашин) пултарулăх енĕпе шăпах институтра вĕреннĕ вăхăтра ĕçлеме тытăнать. А.Кăлканăн «Анисса» пьеси çинчен хайĕн пĕрремĕш статйине çырать. Ăна малтан литкружок ларăвĕнче пăхса тухса ырлаççĕ, пичетлесе кăларма сĕнеççĕ. Статйи вара «Сунтал» журналăн 1936 çулхи 11-мĕш номерĕнче çапăнса тухать. Н.С. Дедушкин кружокçăсем пĕр-пĕринпе туслă пурăннине, çамрăк авторсенчен А.Алка, Кăтра Мишша, Николай Базанов, Иван Пименов, Василий Еремеев уйрăмах хастарлă пулнине, студентсем патне П.Хусанкай, Уйăп Мишши, А.Кăлкан, И.Тукташ, Л.Агаков çыравçăсем час-часах пыра-пыра

кайнине палăртать. Вăл вăхăтра институтра литература каçĕсем нумай ирттернĕ. Кружокçăсем кашни уйăхрах 1-2 номер хаçат кăларнă. Хаçатне А.Терентьев редакцилейĕ. Çамрăк авторсене пултарулăх ĕçĕнче Е.З. Захаров, И.Н. Сутягин, М.С. Сергеев, В.Ф. Шелегов вĕрентӳçĕ-ăсчахсем хавхалантарса пынă.

Вăтăрмĕш çулсен варринче чăваш уйрăмĕ умне кĕтмен çĕртен чăрмавсемпе йывăрлăхсем тухса тăраççĕ. 1936 çул вĕçнелле çĕр-шывра сарăлнă политика хĕсĕрлевĕ пединститута та айккине тăратса хăвармасть. Вăл ывăтакан хура мăйкăчсем чи малтан халăхшăн вăй-халне хĕрхенмесĕр, сывлăхне шеллемесĕр ĕçлекен Т.М. Матвеевпа Е.З. Захаров пуçĕсем çине ӳкеççĕ. 1936 çулхи чӳк уйăхĕн 2-мĕшĕнче Тимофей Матвеевича айăпсăр çĕртенех вĕрентӳçĕсен йышĕнчен кăларса пăрахаççĕ. 1937 çулхи ака уйăхĕн 29-мĕшĕнче институт директорĕн ĕçĕсене туса пыраканĕ А.А. Кондакова Е.З. Захаров пирки 51-мĕш номерлĕ питĕ хăрушă приказ çапса кăларать. Унта çапла çырнă: «Захаров вĕрентӳçе буржуалла националист пулса вĕрентӳре чылай çул хушши вырăс литератури историйĕн марксизм-ленинизм принципĕсене пăсса кăтартнăшăн институтри преподаватель ĕçĕнчен хăтарас».

Е.З. Захаровпа Т.М. Матвеева хӳтĕленĕ çынсене те пуçран шăлмаççĕ. Вĕсене те синкерлĕ шăпах кĕтет. Студент-и вăл, вĕрентӳçĕ-и, урăх ĕçри çын-и – никама та хĕрхенсе тăмаççĕ, институтран тӳрех хăваласа яраççĕ. Малтанхи çавнашкал приказсенчен пĕрне 1937 çулхи утă уйăхĕн 5-мĕшĕнче 106-мĕш номерпе кăларнă. «Халăх тăшманĕсене Захаровпа Матвеева мухтанăшăн, – тенĕ унта, – математика факультечĕн деканĕн çумне П.Д. Данилова ĕçрен хăтарас». Çавăн пекех ятарлă приказсем çырса «маларах националистла организацисен, националистсен съезчĕсен ĕçне хастар хутшăннă, ку таранччен те националистсемпе çыхăнăва татман, хăйĕн политика енĕпе сиенлĕ литература ĕçĕсемшĕн ӳкĕнмен» тесе Осип Андреевич Андреев педагога институтран хăваласа яраççĕ. Химивĕрентӳçине Степан Васильевич Васильева та çав инкекех пырса çапать. Н.М. Кирилловăна института вырнаçнă чух хăйĕн упăшкине шуррисем майлă çапăçнă Н.Патмана (чăваш çыравçине – А.М.) тытса

кайнине пытарнăшăн айăплаççĕ, ăна библиотекарь ĕçĕнчен хăтараççĕ. Студентсем те ним çук çĕртенех шар тӳсеççĕ. 1937 çулхи çурла уйăхĕн 27-мĕшĕнче йышăннă 133-мĕш приказ тăрăх, «халăх тăшманĕсемпе Матвеевпа тата Кудяшовпа çыхăну тытнăшăн Г.И. Иванова», юпа уйăхĕнчи 157-мĕш приказ тăрăх, «хăйĕн хайлавĕсене советсене хирĕçле шухăшсем кĕртсе янăшăн, буржуази националисчĕсемпе çыхăнура тăнăшăн» тата ытти тĕрлĕ «кăлтăксемшĕн» Кудрявцева студентсен йышĕнчен кăлараççĕ. (Кудрявцевĕ ку чăваш çыравçи Кăтра Мишша – Кудрявцев Михаил Ильич. 1938 çулхи нарăс уйăхĕн 28-мĕшĕнче ăна каялла вĕренме илеççĕ – А.М.). Литературăпа чĕлхе факультетĕнчи IV курс студенчĕ А.Бачков та (А.Алка – А.М.) нушаран хăтăлаймасть. В.Харитонов директор приказĕнчи йĕркесене вуласан чун çӳçенсе каять. «А.Бачкова, – тенĕ унта, – унччен комсомолран кăларнăскере, институтра пулнă тапхăрта вĕренӳпе ĕç йĕркине пĕр хут çеç мар пăснăшăн çирĕп айăплавлă асăрхаттаруллă выговор илнĕскере, актив пухăвĕнче тăшмансене хӳтĕлесе калаçнăскере, буржуази националисчĕсемпе Хусанкайпа, Даниловпа тата ыттисемпе юлашки вăхăтченех çыхăнура тăраканскере, студенсен йышĕнчен кăларас». (Тепĕр çулхи пуш уйăхĕн 25-мĕшĕнче çеç А.Бачков институтра вĕренĕве малалла тăсма ирĕк илет – А.М.). Директорăн национализм ыйтăвĕпе çырнă приказĕсене вуланă май пĕр япала тӳрех куçа тăрănать. Институт пуçлăхĕ вĕсене шăрçаланă чух ялан тенĕ пекех хăйĕн чăвашла хушаматлă пулăшуçи В. çырса пани çине таянать. Лешĕ вара «политика тăшманĕсене» тупса палăртас тĕлĕшпе питĕ «тимлĕ» те «сыхă» пулнă пулас. Наци паттăрĕсене чĕрĕлле кăшлакан çак йĕксĕкĕн путсĕр хăтланăвĕсемпе паллашнă хыççăн ирĕксĕрех вара «чăваш чăваша çиет» текен каларăш чăнласах та тĕрĕссине ĕненес килсе каять. Çавнашкал çĕтĕк чунлă сутăнчăк мĕскĕн чăвашсене пула тăван халăхшăн, унăн ырлăхĕшĕн Е.З. Захаровпа Т.М. Матвеев йышши ăнтăлса-çунса тăракан мал ĕмĕтлĕ таса çынсем юратнă ĕçрен вăхăтсăр уйрăлса каяççĕ, тĕрмесенче çĕреççĕ.

Анчах хура вӑйсем тем пек ура хурсан та ырӑ пулӑма пӗтӗмпех чарса лартма май ҫук. Вӑхӑтлӑх такӑнсан та вӑл пурпӗрех ҫӗнӗрен ҫӗкленет, тепӗр хут хӑват илет. Каярахпа пединститутри Емельян Захаровичпа Тимофей Матвеевич хывнӑ пархатарлӑ ҫулпа ыттисем утаҫҫӗ, вӗсен аслӑ ӗҫне малалла хастарлӑн тӑсаҫҫӗ. Вӑтӑрмӗш ҫулсенче тата вӑрҫӑ умӗнхи тапхӑрта кунта вӑй хунӑ ҫынчен уйрӑмах Д.Д. Данилова, М.С. Сергеева, А.С. Сотникова, Н.А. Резюкова, Н.С. Дедушкина, М.Я. Сироткина палӑртмалла. Вӗсенчен кашниех чӑваш чӗлхипе литератури учителӗсем хатӗрлес ӗҫе хӑйӗн тӳпине хывать, пуҫарулӑх кӑтартать, ҫӗннине шырать, пахине ҫул парать.

Вӑрҫӑ умӗнхи ҫулсенче чӑваш уйрӑмӗнче вӗрентӳпе меслетлӗх ҫӗнӗ пахалӑхлӑ пусӑма ҫӗкленет. Кафедра членӗсем вӗрентӗве ӑслӑлӑхпа ӑнӑҫлӑ ҫыхӑнтараҫҫӗ. Н.А. Резюков доцент ҫине тӑрсах чӑваш чӗлхин словарьне хатӗрлет. М.С. Сергеев доцент тепӗр авторпа пӗрле V-VI классем валли чӑваш чӗлхин грамматикине ҫырать. Ӑна вӗрентӳ министерстви пичетлесе кӑларать. Ӑслӑлӑхпа пултарулӑх ӗҫне студентсене те анлӑн явӑҫтараҫҫӗ. Ягуев студент пуҫламӑш классем валли «Чӑваш чӗлхи» кӗнеке пичетлесе кӑларать. Республикӑри хаҫатсемпе журналсенче Н.С. Дедушкин статйисем кун ҫути кураҫҫӗ. 1939 ҫулхи юпа уйӑхӗнче студентсем хушшинче М.Ю. Лермонтов хайлавӗсене чӑвашла чи лайӑх куҫаракансен конкурсне ирттереҫҫӗ. Унта II курсри Еремеев студент аслӑ вырӑс поэчӗн «Ҫул ҫине эп пӗчченҫӗ тухатӑп» сӑввине ӑста куҫарса пӗрремӗш вырӑн йышӑнать. Ӑна институт директорӗн приказӗпе 75 тенкӗ укҫан премилеҫҫӗ. Аслӑ шкул ертӳҫи ҫавӑн пекех II курсри П.И. Ильин студент М.Ю. Лермонтовӑн «Кавказ» сӑввине аван куҫарнине палӑртса хӑварать. Ҫак ҫулах тепӗр уйӑхран кунта Ҫеҫпӗл Мишши ҫуралнӑранпа 40 ҫул ҫитнине савӑнӑҫлӑн паллӑ тӑваҫҫӗ, юбилея ирттерес тӗлӗшпе 7 ҫынран йӗркеленӗ комиссие Н.С. Дедушкинпа В.А. Алатырцева та кӗртеҫҫӗ. 1940 ҫулхи ҫуркунне К.В. Иванов ҫуралнӑранпа 50 ҫул ҫитнине хатӗрленсе ирттерес енӗпе тунӑ комиссире те эпир ҫак ҫамрӑк ҫыравҫӑсен ячӗсене куратпӑр. Ҫав



Пĕрремĕш кăларăм студенчĕ пулнă А.В. Васильев патĕнче хăнара. Сулахайран сылтăмалла: малта – педуниверситет проректорĕ Г.А. Яковлев профессор, А.В. Васильев, «Халăх шкулĕ» журналăн тĕп редакторĕ П.В. Моисеев; хыçалта – республикăри архив ĕçĕсен управленийĕн ĕçченĕ В.А. Васильев (вăл та ашшĕ вĕренĕ институтах пĕтернĕ), В.Ф. Степанов журналист-краевед (унăн ашшĕ те Федор Адрианович Степанов А.В. Васильевпа пĕрле вĕреннĕ), чăваш филологи факультечĕн деканĕ А.И. Мефодьев. Ӳкерчĕке 2000 çулта тунă.

çулхи утă уйăхĕнче аслă сăвăçăмăра халалласа конференци ирттерме йышăнаççĕ. Ытти тĕрлĕ ĕçсем йĕркелеççĕ. Вĕсене пултарулă студентсем йышлăн хутшăнаççĕ. Ăмăртусенче мала тухнисене институт директорĕ чӳк уйăхĕн 4-мĕшĕнче приказ кăларса укçан премилет. I курсри С.П. Селезнев студента чăвашла тухнă «Малтанхи утăм» журнала ӳкерчĕксемпе илемлетсе кăларнăшăн 100 тенкĕ укçан преми парать. Вăлах бюллетене лайăх капăрлатса кăларнăшăн 3-мĕш преми – 50 тенкĕ – илет. III курсри Макарычева студенткăна К.Иванова халалласа паха бюллетень кăларнăшăн 75 тенкĕлĕх иккĕмĕш преми параççĕ.

30-40-мĕш çулсен чиккинче институтра хăйĕн ăсталăхĕпе чăваш драма кружокĕ палăрать. Талантлă çамрăксем чăваш драматургийĕн классикăлла хайлавĕсем тăрăх спектаклĕсем лартаççĕ, рольсене лайăх выляса ку-

ракансене тӗлӗнтереççӗ. 1940 çулхи ака уйӑхӗнче çак йыш илемлӗ пултарулӑх ушкӑнӗсен смотрне хутшӑнать, А.Кӑлканӑн «Анисса» драмине питӗ ӑнӑçлӑ лартса парать, мала тухать, 500 тенкӗлӗх пӗрремӗш премие тивӗçет.

1934 çулхи утӑ уйӑхӗнче институтри литературӑпа лингвистика уйрӑмӗ хӑйӗн пирвайхи «çимӗçӗсене» ӳстерсе çитерет, чи малтан кӗнисене аслӑ пӗлӳллӗ туса, çунат парнелесе чӑваш тӗнчине салатать. Дипломӗ вӗсене вӑтам шкулсенче, техникумсемпе рабфаксенче тата фабрикӑпа завод училищисенче чӑваш чӗлхипе литературине, çавӑн пекех вырӑс чӗлхипе литературине вӗрентме ирӗк парать. Пӗррӗмӗш кӑларӑмра 8 çамрӑк: А.В. Васильев, В.М. Константинова, А.Т. Краснов, Ф.К. Кузьмин, Н.А. Кушников, О.Г. Никитина, А.Г. Орлова, М.Я. Сироткин. Малашне кунтан вӗренсе тухакан чӑваш филологӗсен йышӗ çулсерен ӳссе пырать.

# Юнлӑ вӑрçӑ кӗрленӗ чух

Тӑван çӗр-шывӑн аслӑ вӑрçи, пӗтӗм патшалӑхри пекех, педагогика институчӗпе унти чӑваш уйрӑмӗ умне те пысӑк йывӑрлӑхсем кӑларса тӑратать. Пултаруллӑ, вӑй питти педагогсене фронта илсе каяççӗ. Çав шутра – М.Я. Сироткин, Н.А. Резюков, М.С. Сергеев, Н.С. Дедушкин, Ф.Е. Афанасьев (Хв. Уяр). Вӗренӳре тата общество ӗçӗнче тӗслӗх кӑтартакан арçын студентсенчен те чылайӑшӗ фронта ӑсанать.

Вӑрçӑ çулӗсенче тата ун хыççӑнхи тапхӑрта институтри чӑваш чӗлхипе литература кафедрине С.П. Горский ертсе пырать. Унпа пӗрле малтанхи вӑхӑтра (фронта кайиччен) студентсене тӑван чӗлхепе сӑмахлӑха Н.А. Резюковпа М.С. Сергеев вӗрентеççӗ. Каярахпа кафедра ӗçне Н.С. Павловпа Е.Д. Римова хутшӑнаççӗ. Лаборант тивӗçне Ф.Д. Иванова, вӑл вӗрентӳçе куçнӑ хыççӑн Ф.Е. Афанасьев-Уяр (фронта кайиччен) пурнӑçлаççӗ.

1941 çулхи юпа уйӑхӗн 22-мӗшӗнче института Шупашкартан Сӗнтӗрвӑррине куçарма йышӑнаççӗ. Çӗнӗ вы-

рăна куçма çăмăл пулман. Ф.Д. Иванова лаборант чăваш чĕлхипе литература кабинечĕн 1941-1942 вĕренӳ çулĕнчи ĕçĕ-хĕлĕ çинчен тунă отчетра хăйĕн чылай тертленме тивнине палăртать. Вĕренӳ çулĕ пуçлансан вăл кафедрăри кĕнекесен ытлашши экземплярĕсене институт библиотекине парать, пӳлĕмри мĕнпур япалана пуçтарса тирпейлĕн çыхса хурать, кайран баржа çине тиессине йĕркелет. Атăл урлă каççан çыхăсене çыран хĕрринчен Сĕнтĕрвăррине алă вĕççĕн куçараççĕ. Часах чĕлхепе литература кабинечĕ çĕнĕрен чĕрĕлсе тăрать. Урăх вырăна куçса каяссипе çыхăннă чăрмавсене пула институтра занятисем чӳк уйăхĕн 3-мĕшĕнче анчах пуçланаççĕ. Часах Сĕнтĕрвăрри райĕçтăвкомĕ йышăннипе мĕнпур студентсемпе вĕрентӳçĕсене предприятисемпе колхозсене ĕçлеме яраççĕ. Вĕренӳ вара раштав уйăхĕн 25-мĕшĕнче тин тытăнать.

Çав вăхăта педагогика институтĕнче вĕреннĕ А.С. Канюкова нумай çул иртнĕ хыççăн çапла аса илет: «1941 çулхи кĕркунне института лекцисем итлеме килтĕмĕр те – вăл çук та иккен. Унта эвакуации йĕркипе килнĕ Харьков электромеханика завочĕ вырнаçнă. Пединститут Сĕнтĕрвăррине куçса кайнă. Вăрман техникумĕн çурчĕсенче вĕренме пуçларăмăр. Малтанхи вăхăтра йывăрлăхсем нумайччĕ. Студентсем тепĕр чухне çăкăр паюкне 3-4 кун хушши илейместчĕç, шăннă купăстаран пĕçернĕ яшка çинипех тата вĕретнĕ шыв ĕçкеленипех çырлахатчĕç, анчах вĕренме пăрахмастчĕç. Аудиторисенче ларсах кайман эпир, лекцисем сахал итленĕ. Сĕнтĕрвăрри тăрăхĕнчи хресченсемпе пĕрле танксенчен хӳтĕленес тĕллевпе траншейăсем чаваттăмăр, вăрман касма çӳреттĕмĕр, тыр-пул пухса кĕртеттĕмĕр, самолетсен «Чăваш комсомолĕ» эскадрилийине тума укçа-тенкĕ пуçтараттăмăр, фронтра çапăçакан салтаксем валли ăшă тум-тир хатĕрлесе ăсататтăмăр».

Кафедра çыннисем вăрçă вăхăтĕнче, мĕнле хĕн килсен те, пуç усса тăмаççĕ, нăйкăшса лармаççĕ, чăрмавсемпе асапсене çĕнтерсе малалла утаççĕ. Сывлăхне хĕрхенмесĕр ĕçлеççĕ, пур япалана та вăхăтра тата тĕплĕн тума тăрăшаççĕ. Педагогсем вĕренӳпе пĕрлех тĕпчев ĕçне те манăçа хăвармаççĕ. Фронта тухса кайич-

ченхи тапхăрта М.С. Сергеевпа Н.А. Резюков вăтам шкулсем валли кĕнекесем хатĕрлес енĕпе тимлеççĕ. Кафедра ертӳçи С.П. Горский хĕрсех аслă шкулта вĕренмелли чăваш чĕлхин ăслăлăх грамматикине çырать. Чăваш литература чĕлхи историйĕпе орфографине вĕренме пулăшас тĕлĕшпе пособисем хатĕрлет.

Кафедра ларăвĕсенче çак тапхăрта вĕренӳпе, ăслăлăхпа, воспитани ĕçĕпе çыхăннă кирлĕ ыйтусене пăхса тухаççĕ. Тĕслĕхрен, 1942 çулхи ака уйăхĕн 16-мĕшĕнче кафедра ертӳçи С.П. Горский литература кружокĕ йĕркелесси çинчен тунă доклада сӳтсе яваççĕ. Кружока I-III курссенчи 15 студента явăçтарма йышăнаççĕ. Ăна ертсе пыма III курсри А.С. Семеновăна çирĕплетеççĕ. Литература кружокĕнчи пĕрремĕш калаçăва илемлĕ хайлава тĕрĕс те уçăмлă вулама вĕренмелли хăнăху занятийĕ евĕр йĕркелеме палăртаççĕ. Çав тĕллевпе кашни студентăн пĕрер сăвă пăхмасăр вĕренсе килмелле тесе йышăну тăваççĕ.

Вăрçă çулĕсенче институтра вĕренӳ планĕсене пĕрмаях улăштарса тăраççĕ, кĕскетеççĕ. Чăваш уйрăмĕн профильне те урăхлатаççĕ. Унччен тăван чĕлхепе литература вĕрентӳçисене хатĕрленĕ пулсан халĕ çавăн çумне вырăс чĕлхипе литературине хушаççĕ. Директорăн 1944 çулхи чӳк уйăхĕн 25-мĕшĕнче кăларнă приказĕпе килĕшӳллĕн пединститута пăхăнса тăракан учительсен институтĕнчи чĕлхепе литература факультетĕнчи чăваш уйрăмне историпе филологи уйрăмĕпе пĕрлештереççĕ. Историпе филологи уйрăмĕн I курсĕнче икĕ ушкăн туса хураççĕ. Вĕсенчен пĕри – истори тата вырăс чĕлхипе литература учителĕсене, тепри – истори тата чăваш чĕлхипе литература учителĕсене хатĕрлеме пуçлать.

Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçи тапхăрĕнче чăваш чĕлхипе литература вĕрентӳçисене пединститутра – 16, учительсен институтĕнче – 88 çын хатĕрленĕ.

Вăрçă çухатусăр пулмать. Педагогика институтĕнче вĕреннисенчен чылайăшĕ çапăçу хирĕнче пуçĕсене хурать. Çак йышра – чăвашсен паллă çыравçисем Кăтра Мишша, Николай Чурпай, Василий Васькин, Николай Базанов, Елизар Абакшин, Иван Алексеев, Вениамин Туртуш, Николай Пиктемир т. ыт. те.

# Вăрçă хыççăнхи çěкленў

Вăрçă хыççăн чăваш чěлхипе литература уйрăмěн кун-çулěнче çěнě пахалăхлă тапхăр тытăнать. Тăнăç пурнăç пуçланнине кура вěренўпе вěрентěве йěркелемелли майсем лайăхланаççě. Тăван халăх ывăлěсемпе хěрěсем çанна тавăрса вěренме тытăнаççě. Вěсем хушшинче çар тумěпе çўрекенсем те сахал мар.

1945 çулта нумай пулмасть ялтан килнě Л.П. Сергеев, И.П. Павлов тата ытти çамрăк студентсем çумне вăрçă витěр утса тухнă салтаксем хутшăнаççě. Вěсем хушшинче – Е.В. Владимиров (малтан вăл чăваш уйрăмěнче вěренет, кайран вырăс уйрăмне куçать), А.В. Тимофеев (Сантăр Тимпай), В.А. Урташ (пěр çул вěренсен пăрахать). 1946 çулта вара чăваш уйрăмěнче пулас паллă ăсчахсем И.И. Одюков, В.Я. Канюков, И.А. Андреев вěренме пуçлаççě.



1950 çулта тунă çак ўкерчěкре литература факультечěнчи IV «А» курсри студент-практикантсене Е.Д. Римова меслетçě-вěрентўçěпе пěрле куратпăр. Сулахайран сылтăмалла: малта – Н.Петров, Т.Тихонова, Е.Д. Римова, М.Емельянова, Н.Иванов, хыçалта – Г.Сидоров, Г.Андреев, Г.Пласкин, П.Журавлев.

Педагог-ăсчахсем те фронтран таврăнса хăйсен ӗçне пуçăнаççӗ. Çартан пуринчен те маларах çитнӗ Н.А. Резюкова институт директорӗ 1945 çулхи авăн уйăхӗн 4-мӗшӗнчи приказпа чăваш чӗлхипе литература кафедрин аслă преподавательне лартать. Раштав уйăхӗн 30-мӗшӗнче вăл М.Я. Сироткина кафедра доценчӗн ӗçӗсене туса пыма йышăнать. 1950 çулта истори факультетӗнчен историпе филологи факультечӗ туса хураççӗ. Çӗнӗ факультет тăватă уйрăмран тăрать: истори, чăваш чӗлхипе литератури, чăваш шкулӗсенчи вырăс чӗлхипе литератури тата вырăс чӗлхипе литератури. 1956 çулта институтри студентсем 5 çуллă вӗренӳ планӗ çине куçаççӗ. Реорганизаци пулса иртет: факультетсен шутне 4-ран 6-та çитереççӗ. Вӗсенчен пӗри – историпе филологи факультечӗн никӗсӗ çинче йӗркеленнӗ вырăс чӗлхипе литература тата чăваш чӗлхипе литература факультечӗ.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче кафедрăна малтан С.П. Горский, унтан В.Г. Егоров ертсе пырать. 1951 çулхи пуш уйăхӗн 8-мӗшӗнче çак ӗçе М.Я. Сироткин доцент пуçăнать. Унпа пӗрле кунта 6 çын тăрăшать: В.Г. Егоровпа С.П. Горский доцентсем, А.С. Канюкова, Н.А. Резюков, Е.Д. Римова аслă вӗрентӳçӗсем тата Н.Я. Любимов ассистент. 1952 çулхи кăрлач уйăхӗн 15-мӗшӗнче, М.Я. Сироткин докторантурăна кайнă май, кафедра «тилхепи» тепӗр хут С.П. Горский аллине куçать. 1956 çулхи авăн уйăхӗн 1-мӗшӗнче Мускавран таврăнсан кафедрăна каллех М.Я. Сироткин ертсе пыма тытăнать.

Кафедра вӗрентӗве пурнăçпа тачă çыхăнтарассишӗн тимлет, çӗннине шырать, шкулсемпе çирӗп çыхăну тытать. Педагогсем ялсене нумай тухса çӳреççӗ. 1957 çулхи ака уйăхӗнче кафедра членӗсем икӗ ушкăна пайланса Çӗрпӳ районӗнчи шкулсене тăван чӗлхепе литературăна мӗнле вӗрентнипе паллашма тухса каяççӗ. 1959 çулхи юпа уйăхӗн 16-22-мӗшӗсенче малта пыракан учительсен ӗç опытне тӗпчес тӗллевпе И.П. Павлов – Çӗрпӳ, И.И. Одюков – Октябрь, С.П. Юшков Елчӗк районӗ-

4-40042
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
...ШСКОЙ




Литература факультечĕн 18-мĕш кăларăмĕ. 1951 çул.

сенчи шкулсенче пулаççĕ. Кунсăр пуçне С.П. Юшков шкулсенче Москаленко меслечĕ епле сарăлнине пĕлес шутпа тĕрлĕ çĕре çитсе килет.

Педагог-ăсчахсем вĕренӳ кĕнекисем хатĕрлес тĕлĕшпе тимлĕ ĕçлеççĕ. Н.А. Резюков IV класс валли «Чăваш чĕлхи» (1948), В.Г. Егоров III класри чăваш ачисем валли «Вырăс чĕлхи» (1949), С.П. Горский VI-VII классем валли «Чăваш чĕлхи грамматики» (1954), вăтам шкул валли «Чăваш чĕлхи синтаксисĕ» (1959), С.П. Юшков «Чăваш чĕлхин фонетикипе морфологине вĕрентесси» (1956) кĕнекесем кăлараççĕ.

Кафедра ĕçченĕсем вĕренӳ кĕнекисемпе пĕрлех пысăк тĕпчевсем те хатĕрлеççĕ. Паллăраххисен шутĕнче – М.Я. Сироткинăн «М.Ф. Федоров» (1947), «М.К. Сеспель» (1949), «Константин Васильевич Иванов» (1955), «Николай Иванович Полоруссов (Шелеби)» (1956), «Очерки дореволюционной чувашской литературы» (1948), «Очерк истории чувашской советской литературы» (1956), В.Г. Егоровăн «Чăвашла-вырăсла словарь» (1954), «Халыхи

чăваш литература чĕлхине танлаштаруллă истори меслечĕпе тĕпчени» (1954), С.П. Горскин «Очерки по истории чувашского литературного языка дооктябрьского периода» (1954), Н.И. Ивановăн «О чувашском народном стихосложении» (1957) ĕçĕсем.

Аллăмĕш çулсенче кафедра членĕсем тăтăшах наука командировкисене кая-кая килеççĕ. Çапла М.Я. Сироткин Мускавра (1958), Якутскра (1954), Ĕпхӳре (1958), А.С. Канюкова Мускавра (1959), Бакура (1956), Хусанта (1958), И.П. Павлов Мускавра (1959), Ашхабадра (1959) пулаççĕ.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче чăваш чĕлхипе литература кафедринче наука кадрĕсене хатĕрлес ĕç çӳллĕ пусăма çĕкленет. В.Г. Егоровпа С.П. Горский (1951) тата М.Я. Сироткин (1955) ăслăлăх докторĕсем, А.С. Канюкова (1950), С.П. Юшков (1953), В.Я. Канюков (1954),



1953 çулта тунă сăн ӳкерчĕкре III «А» курс студенчĕсем. Сулахайран сылтăмалла: пĕрремĕш ретре – В.Алексеева, С.Петрова, Г.Михайлова, Е.Римова (меслетлĕх вĕрентӳçи), А.Андреев, З.Александрова, Д.Платонова; иккĕмĕш ретре – З.Емельянова, Е.Мироновская, Е.Михайлова, Г.Кудряшова, В.Григорьев, Ю.Кольцова, В.Иванов, Р.Васильева, Н.Яковлева, Ф.Васильева; виççĕмĕш ретре – С.Самсонова, А.Иванова, Е.Федорова, А.Казанов, Н.Григорьев, И.Сергеев, М.Егорова, А.Дмитриева.

И.П. Павлов (1956) ăслăлăх кандидачĕсем пулса тăраççĕ. 1957 çулхи ака уйăхĕн 17-мĕшĕнче институт Канашĕн ларăвĕнче М.Я. Сироткина РСФСР Педагогика ăслăлăх академийĕн член-корреспонденчĕ пулма кандидата тăраççĕ. 1953 çулхи авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнче институтра «Чăваш чĕлхи» тата «Чăваш литератури» специальноçсемпе аспирантура уçăлать. Ăна С.П. Горский, М.Я. Сироткин тата В.Г. Егоров профессорсем ертсе пыраççĕ. Малтанхи аспирантсем: И.И. Одюков (ăслăлăх ертӳçи – М.Я. Сироткин), И.А. Андреев (ертӳçи – В.Г. Егоров), Н.И. Иванов (ертӳçи – М.Я. Сироткин), А.Е. Горшков (ертӳçи – В.Г. Егоров), М.Ф. Чернов (ертӳçи – С.П. Горский); заочно: Е.И. Паймина (ертӳçи – М.Я. Сироткин), Н.И. Петров (ертӳçи – С.П. Горский), Н.Т. Терентьев (ертӳçи – М.Я. Сироткин), В.Н. Абашев (ертӳçи – М.Я. Сироткин).



1951 çулхи çĕртме уйăхĕнче тунă ӳкерчĕкре чĕлхепе литература факультетĕнчи I «А» курс студенчĕсем пĕрремĕш вĕренӳ çулĕ хыççăн. Сулахайран сылтăмалла: пĕрремĕш ретре – Е.Федорова, Ю.Морозова, Г.Кудряшова, Б.Сазонтьев (психологи вĕрентӳçи), А.Андреев, Р.Прокопьева, З.Емельянова; иккĕмĕш ретре – И.Сергеев, Р.Васильева, Е.Мироновская, С.Петрова, А.Казанов, М.Егорова, А.Иванова, Ю.Кольцова.



1958 çулта тунă ўкерчĕкре – «Советская Чувашия» хаçат парнине çĕнсе илессишĕн пынă ăмăртура çĕнтернĕ команда. Унăн йышĕнче чăваш уйрăмĕн студенчĕсем те пур.

Аллăмĕш çулсенче чăваш уйрăмĕнчи студентсенчен чылайăшĕ вĕренўре лайăх ĕлкĕрсе пырать. Пур экзамена та «пиллĕк» паллăпа тытнисем пысăклатнă стипенди илсе тăраççĕ. Вĕсен шутĕнче – А.В. Малов, В.Я. Канюков, Е.А. Паймина. А.В. Малов, И.П. Павлов, В.Я. Канюков, Г.С. Сидоров тата ытти студентсем тĕрлĕ вăхăтра И.Я. Яковлев ячĕллĕ стипендие тивĕçеççĕ. А.Е. Горшков Сталин стипендийĕ (вăл вăхăтри чи пысăк стипенди) илсе тăрать. 1950 çулта В.Я. Канюковпа И.И. Одюков тата Д.С. Семенова, 1951 çулта Г.С. Сидоров, 1953 çулта А.Е. Горшков чăваш уйрăмĕнчен хĕрлĕ дипломпа вĕренсе тухаççĕ.

Кафедра студентсене ăслăлăх ĕçне анлăн явăçтарать. Вĕрентўçĕсемпе вĕренекенсем ялсене материал пухма тухса çўреççĕ. Тĕслĕхрен, 1954 çулхи утă уйăхĕнче кафедра тĕрлĕ çĕрти чăвашсен калаçу уйрăмлăхĕсене тĕпчес тĕллевпе ăслăлăх экспедицийĕ ирттерет. Ăна филологи наукисен кандидачĕ А.С. Канюкова ертсе пырать. Аспирантсемпе студентсенчен икĕ ушкăн йĕркелеççĕ. Пĕрремĕшĕ, А.Ксенофонтовăпа А.Егорова студентсенчен

тăраканскер, Елчĕк районне çул тытать; тепри, И.Андреевпа И.Одюков аспирантсенчен тата Г.Лукояновпа А.Кушникова студентсенчен тăраканскер, Шăмăршă районне тухса каять. Чăваш уйрăмĕнче вĕренекенсем институтра тĕрлĕ çулсенче ирттернĕ чи лайăх ăслăлăх ĕçĕсен конкурсĕсенче малти вырăнсене йышăнаççĕ. Сăмахран, 1947 çулта йĕркеленĕ çавнашкал конкурсра литература факультечĕн студенчĕсем Е.Владимиров, Е.Паймина, А.Иванова, И.Павлов чăваш чĕлхипе тата сăмахлăхĕпе çыхăннă темăсемпе тĕпчевсем хатĕрлесе, çĕнтерӳçĕсем пулса тăраççĕ, укçан паракан премисене тивĕçеççĕ. 1950 çулта ирттернĕ тепĕр çакăн пек конкурс та институтри пултаруллă çамрăк тĕпчевçĕсене тупса палăртма пулăшать. Аслă шкул директорĕ В. Ефимовăн Иван Ивник пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен çырнă «Ирĕклĕ пурнăç юрăçи», И.Андреевăн «Исторические изменения в лексике чувашского языка», В.Терентьевăн «Чăваш чĕлхинчи инфинитив», Г.Пласкинăн «Хумма Çеменĕн юрри-сăввисем» ĕçĕсем пысăк пахалăхлă пулнине приказ çырса палăртать, вĕсене тав тăвать. Уйрăмах лайăх тĕпчевсене Раççей пединститучĕсенчи студентсен ăслăлăх ĕçĕсен смотрне тăратаççĕ. 1951 çулта пулса иртнĕ çакнашкал смотр итогĕсем тăрăх чăваш студенчĕ А.Е. Горшков (паян вăл факультет ăсчахĕ) тăратнă статьяна чи пахисен шутне кĕртеççĕ, унăн авторне РСФСР Çутĕç министерствин Мухтав хучĕпе чыслаççĕ.

Аллăмĕш çулсен иккĕмĕш çурринче вырăс-чăваш уйрăмĕнче вĕренекенсем унччен студентсен ырă йăли-йĕркисене малалла тăсаççĕ. Вĕсем пĕлӳлĕх тĕнчине ăнтăлаççĕ, ăслăлăхпа пултарулăх енне туртăнаççĕ. Тĕслĕхрен, Г.А. Анисимов студент питĕ лайăх вĕренсе пырать. Çавăнпа пĕрлех сцена ăсталăхĕпе тĕпчевçĕ туйăмĕ пысăк пулнипе палăрса тăрать. Вăл чăвашпа вырăс чĕлхисене танлаштарса вĕсен хăйне евĕрлĕхне сăнать. Ăна çав çулсенче пичетре чăваш чĕлхинчи падежсем пирки пыракан тавлашусем кăсăклантараççĕ. Пединститута хĕрлĕ дипломпа пĕтернĕ çак пултаруллă çамрăка 1958 çулта республикăри яш-кĕрĕм валли тухса тăракан хаçат редакцине ĕçлеме яраççĕ. Каярахпа вăл Раççей наукин

çӳллĕ тӳпине çĕкленет, педагогика ăслăлăхĕсен докторĕ пулса тăрать, кайран тăван аслă шкула таврăнать, кунти вырăс чĕлхи кафедрине ертсе пырать. Вăл – наци шкулĕсенче вырăс чĕлхине вĕрентессипе çыхăннă паха тĕпчевсен авторĕ, çĕр-шывĕпе паллă ăсчах. Унпа пĕрле факультетра çине тăрса вĕреннĕ ытти каччăсемпе хĕрсен те кайрантарахри шăпи телейлĕ килсе тухать. Н.М. Дубинин парти обкомĕнче тата Чăвашрадио пуçлăхĕнче, В.П. Романов журналистикăра тата профсоюз обкомĕнче, В.И. Котлеев тăван институтра вĕрентӳ ĕçĕнче вăй хураççĕ.

Вăрçă хыççăнхи тапхăрта институтра студентсен пултарулăхĕ нихçанхинчен те хĕрӳллĕнрех тапса тăрать. Аллăмĕш çулсен пĕрремĕш çуррине кунта тăватă кружок уйрăмах ăнăçлă ĕçлет. Вĕсем çаксем: чăваш чĕлхи, чăваш литератури, куçару ĕçĕ, лингвистика. Куçару ĕçĕн кружокне староста пулса малтан И.Тенюшев, каярахпа А.Казанов студентсем ертсе пыраççĕ. Çамрăк тăлмачсем Мария Ухсайпа тĕл пулаççĕ. Вăл вĕсене хăй «Ылтăн çăлтăр кавалерĕ» романа чăвашла мĕнле куçарни çинчен каласа парать. Тепрехинче вĕсем патне Илпек Микулайĕпе Уйăп Мишши пыраççĕ. З.Митта студентка Э.Казакевичăн «Çăлтăр» романне чăвашла еплерех куçарни пирки калани пурне те килĕшет. А.Казанов «Хĕрача ашшĕне шырать» повеçе чăвашла куçарнине тĕплĕн тишкерет. Тăлмач ĕçне студентсем те хутшăнаççĕ. Сăмахран, И.Тенюшевпа А.Горшков тутар çыравçин Кави Наджмин «Çурхи çилсем» романне питĕ ăнăçлă куçараççĕ, пичетлесе кăлараççĕ.

Драма кружокне çамрăк артист Н.Терентьев лайăх ертсе пырать. Çак коллектив 1950 çулта хулари пултарулăх ушкăнĕсен ăмăртăвне хутшăнса пысăк ăсталăх кăтартать. Институт директорĕ ăна приказпа тав тăвать. Н.И. Иванов студента пултаруллă пулнăран аслă шкулăн хисеп кĕнекине кĕртеççĕ. 1951 çулта çамрăк артистсем Ф.Павловăн «Сутра» комедине лартса параççĕ. Ухтерккене В.Константинов, заседателе А.Казанов, Крахьяна Г.Большакова выляççĕ. Халăх спектакле ăшшăн йышăнать, лайăх хак парать.


1958 çулхи çĕртме уйăхĕ. Студентсем походра. Вĕсене В.Т. Сейфуллин вĕрентÿçĕ ертсе пырать.

Çак çулсенче литература кружокĕ хăйĕн ĕçне анлăн сарса ярать. Ăна тĕрлĕ вăхăтра А.Малов, А.Горшков. Б.Тихонов, М.Ильин (Юхма Мишши), Д.Гордеев тата ытти пултарулă студентсем ертсе пыраççĕ. 1946 çулхи раштав уйăхĕнче М.Я. Сироткин пуçарнипе литература кружокĕн бюровне суйлаççĕ. Унта виçĕ çынна кĕртеççĕ: Аркадий Малова, Елизавета Пайминана, Наум Любимова. Ертÿçи – виççĕмĕш курс студенчĕ А.Малов. Пултарулăх ĕçне Сергей Юшков, Иван Павлов, Анатолий Горшков, Иван Андреев, Николай Петров, Александр Тимбай, Анатолий Жирнов т. ыт. те хастар хутшăнаççĕ. Кружока хĕрсем те юратса çÿреççĕ. Вĕсем шутĕнче – Дарья Филиппова, Ольга Любимова, Антонина Тимофеева, Галина Моисеева. Кружок алăпа çырса «Пирĕн ялав» журнал кăларса тăрать. Унта çамрăк авторсен сăввисемпе калавĕсем, Н.Любимовăн «Аля Белова» пьеси кун çути кураççĕ. Журнала А.Родионов художник питĕ ăста илемлетет. Кружок членĕсем хăйсем çырнă япаласене пăхса тухаççĕ, чăваш писателĕсемпе тĕл пулаççĕ, вĕсен хайлавĕсене тишкереççĕ. Малтанхи занятисенчен пĕринче Хв. Уярăн «Пăлхав» («Шурча таврашĕнче») романне тимлĕн сÿтсе яваççĕ. Часах çак хайлав «Илемлĕ

литература» («Тӑван Атӑл») журналта пичетленет. А.Артемьевӑн «Ан авӑн, шӗшкӗ» кӗнекине, А.Талвирӑн «Эсӗ инженер пулатӑн» повӗçне, В.Ржановӑн «Энтип» драмине пӑхса тухнӑ чух занятисем питӗ хӗрӳллӗ иртеççӗ. Кружокçӑсем институтра Петӗр Хусанкайӑн каçне йӗркелеççӗ. Зала лӑк тулли халӑх пуçтарӑнать. Унта поэтӑн «Сӑвӑсемпе поэмӑсем» кӗнекине пӑхса тухаççӗ. И.Н. Сутягин педагог доклад тӑвать. П.Хусанкай хӑйӗн сӑввисене чӑвашла та, вырӑсла та нумай вуласа парать. Николай Иванов (Микки Микули) тата ытти студентсем тухса сӑмах калаççӗ. Николай Петров студент (пирӗн халыхи хисеплӗ профессорӑмӑр) уява пуçтарӑннисене поэтӑмӑра халалласа çырнӑ сӑввине вуласа парать. Çакнашкал тӗл пулусем, ларусем институтра çеç мар, учительсен çуртӗнче те, республика библиотекинче те иртеççӗ. Кружок членӗсем ятсене нумай тухса çӳреççӗ. Аллӑмӗш çулсен пӗрремӗш çурринче литература кружокӗ малалла ӑнӑçлӑ утӑмсем тӑвать. Ӑна А.Горшков пуçарулӑ ертсе пырать. Çак тапхӑрта пултарулӑх



Чӑваш чӗлхипе литература кафедрин вӗрентӳçи В.Я. Канюков чӑваш çыравçисемпе тата студентсемпе пӗрле Н.В. Шупуççыннине халалласа ирттернӗ уяв хыççӑн.

ĕçĕнче Мария Волкова, Аркадий Казанов, Елизавета Васильева, Борис Тихонов, Николай Григорьев, Андрей Андреев, Александр Галкин палăраççĕ. Йышпа пĕрле сӳтсе явнă хыççăн чи паха хайлавсене вĕсем республикăри хаçат-журналта пичетлеççĕ. Б.Тихоновпа М.Волкова сăввисене çамрăк ăру хапăл туса йышăнать. А.Казанов «Аттене» сăвă, «Аппĕпе ывăлĕ» калав, «Икĕ пуртă»



50-мĕш çулсен пĕремĕш çурринче вĕреннисем институт пĕтернĕренпе 25 çул çитнĕ ятпа 1979 çулхи çулла ирттернĕ тĕл пулу. Сулахайран сылтăмалла: пĕрремĕш ретре – С.Петрова (Калашникова), А.С. Канюкова доцент, С.Самсонова; иккĕмĕш ретре – В.Алексеева (Семенова), Е.Мироновская (Титова), А.Иванова (Александрова), Д.Платонова (Охотина), З.Емельянова (Степанова), Н.Яковлева (Белова), З.Александрова (Федорова), А.Дмитриева (Абаськина), Е.Федорова (Васильева), виççĕмĕш ретре – А.Казанов, И.Сергеев, Р.Васильева (Скребкова), Н.Григорьев, А.Андреев.

юптару, «Хĕр ача аппĕне шырать» кĕнеке çинчен рецензи т. ыт. те пичетлесе кăларать. Кружок членĕсем А.Артемьева тĕл пулăва чĕнеççĕ, унăн «Хĕрлĕ çăлтăр» повеçне тимлĕн сӳтсе яваççĕ.

Малалли тапхăрта литература кружокĕ çĕнĕ йышпа пуянланать. Унăн членĕсем кружокра хăйсен ăсталăхне туптаççĕ, пултарулăхра малтанхи ăнăçлă утăмсем тăваççĕ.

Чылай вăхăт иртнĕ хыççăн çав авторсем паллă çыравçăсем пулса тăраççĕ. Çавсен шутĕнче – Васлей Игнатьев, Юрий Скворцов, Петĕр Вашават, Юхма Мишши, Юрий Петров, Валем Ахун, Николай Мартынов, Денис Гордеев т. ыт. те.

1946-1959 çулсенче педагогика институчĕн кăнтăрлахи уйрăмĕнче 191 çын «чăваш чĕлхипе литератури», 147 çын «вырăспа чăваш чĕлхисем тата литературисем», кусăн мар уйрăмра 158 çын «чăваш чĕлхипе литератури» специальноçсене вĕренсе алла илет. Учительсен институчĕ çак хушăра «чăваш чĕлхипе литератури» специальноçпа кăнтăрлахи уйрăмра 203, кусăн мар уйрăмра 108 вĕрентÿçĕ хатĕрлет.

## Утмăлмĕш çулсен тивлечĕ

Утмăлмĕш çулсем пединститутри чăваш уйрăмĕн кунçулне çĕнĕ çитĕнÿсен тапхăрĕ пулса кĕрсе юлаççĕ. Çак хушăра кунта вĕрентÿпе вĕренÿре те, ăслăлăхра та, ÿнерпе воспитани ĕçĕнче те ырă улшăнусем пулса иртеççĕ. 1965 çулта «чăвашла нимĕç чĕлхисем», «чăвашла акăлчан чĕлхисем» специальноçсем вырăнне «вырăспа чăваш чĕлхисем тата литературисем» специальность туса хураççĕ. Педагог-ăсчахсем малтанхи пархатарлă йăлана малалла тăсса шкулсене тăтăшах тухса çÿреççĕ. Тĕслĕхрен, С.П. Юшков вĕрентÿçĕ 1960 çулхи чÿкпе раштав уйăхĕсен чиккинче Шупашкар тата Сĕнтĕр районĕсенче пулать. 1964 çулхи çу уйăхĕнче С.П. Горский профессор Пушкăртстанпа Самар тăрăхне çитсе килет, унти шкулсенче чăваш чĕлхине мĕнле вĕрентнипе кăсăкланать, учительсене май килнĕ таран пулăшма тăрăшать.

Кафедра ĕçченĕсем, яланхи пекех, чăваш шкулĕ валли вĕренÿ кĕнекисем çырассине хăйсен тĕп тивĕçĕ вырăнне хураççĕ. Ку ĕçрен пĕри те юлмасть. Тĕслĕх кăтартаканĕ, паллах, кафедра ертÿçи М.Я. Сироткин профессор хăй. Вăл питĕ тухăçлă ĕçлет. Икĕ çул хушшинче (1960, 1966) тĕрлĕ классенче тăван литературăна вĕренмелли 5 кĕнеке (вĕсенчен пĕрне Д.С. Филипповăпа пĕрле çырнă) кăларать. С.П. Горский тăван халăх ачисене чăваш чĕлхин синтаксисне вĕренмелли икĕ кĕнеке



Вырăс-чăваш уйрăмĕнчи V «А» курс. 1961 çулхи кăрлачăн 3-мĕшĕ.

(1963, 1966) парнелет. I–X классем валли хатĕрленĕ вĕренӳ кĕнекисен авторĕсем хушшинче эпир çавăн пекех А.С. Канюкова, С.П. Юшков, В.Я. Канюков, И.П. Павлов, И.И. Одюков ячĕсене куратпăр.

Кафедрăри ăсчахсем, шкул ачисемшĕн тăрăшнипе пĕрлех, тăван институтри студентсем çинчен те манса каймаççĕ. Вĕсем валли темиçе вĕренӳ кĕнеки кăлараççĕ. Çавсем шутĕнче: М.Я. Сироткинăн «Очерки дореволюционной чувашской литературы» (1967), «Чувашский фольклор» (1965), А.С. Канюковăн «Чувашская диалектология» (1965), М.Ф. Черновăн «Обособленные определения в современном чувашском языке» (1961), «Обособленные члены предложения в современном чувашском языке» (1963) кĕнекисем.

1964 çул пуçламăшĕнче республикăри ялсемпе хуласенче учительсем чăваш чĕлхи программин проектне сӳтсе яваççĕ. Пединститутри чăваш чĕлхеçисемпе сăмахçисем те çак ĕçрен айккинче тăрса юлмаççĕ. С.П. Горский, И.П. Павлов, М.Ф. Чернов, Л.П. Сергеев кăрлач уйăхĕнче районсене тухса каяççĕ, проекта лайăхлатма хутшăнаççĕ.




1961 çулхи кăларăм.

Кафедра ăслăлăх кадрĕсем çитĕнтерессине, вĕсен ăсталăхне ÿстерессине чи кирлĕ ĕçсенчен пĕри тесе шутлать. Вĕрентÿçĕсене час-часах наука командировкисене кăларса ярать. Тĕслĕхрен, 1960 çулта А.С. Канюкова Баку хулине, И.И. Одюков Саратова, М.Я. Сироткинпа С.П. Юшков Мускава, 1961 çулта В.Я. Канюков Киева, 1965 çулта Н.А. Леонтьев Мускава кайса килеççĕ. Республикăра наука степенĕллĕ чăваш чĕлхеçисемпе сăмахçисен йышĕ ÿсет: М.Ф. Чернов (1963), Д.С. Филипповӑпа В.Н. Абашев (1965), И.И. Одюков (1966) кандидат диссертацийĕсене ăнăçлă хÿтĕлеççĕ. Пединститутри кафедра 1961 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнче «Чăваш чĕлхи» специальноçпа икĕ çынна (кăнтăрлахи уйрăма Л.П. Сергеева, куçăн мар уйрăма Н.М. Дубинина) аспирантурăна йышăнать. Вĕсен ăслăлăх ертÿçи – С.П. Горский профессор.

50-60 çулсен чиккинче педагогика институтĕнче литература кружокĕ хĕм кăларса ĕçлет. Ăна Денис Гордеев тăрăшса ертсе пырать. Литкружокăн канăççăр хастарĕсем çаксем: Виталий Станьял, Валерий Егоров, Геннадий



1961 çулхи çу уйăхĕн 20-мĕшĕ. Историпе филологи факультетĕнчи акăлчан-чăваш, нимĕç-чăваш уйрăмĕн студенчĕсем экзамен хыççăн.

Юмарт, Виталий Чекушкин, Андрей Алексеев-Рыкка, Юрий Петров... Çамрăк çыравçăсем «Шанчăк» хаçат, алăпа çырса журнал кăларса тăраççĕ. Хаçачĕ питĕ пысăк: виçĕ-тăватă хăлаç тăршшĕ, икĕ хăлаç сарлакăш. Хаçатне пĕр сиктерми кăларса тăраççĕ. Ларусене кашни эрнерех ирттереççĕ. Сăвă-калав вулаççĕ, тишкереççĕ, хаклаççĕ. «Çамрăк коммунист» хаçатпа, журналсемпе çыхăну тытаççĕ. Хăюллăн, ирĕккĕн, кĕретĕн ĕçлеççĕ пулас профессионал-писательсем, сăмаха куçран, тÿррĕн, уççăн калаççĕ, «юраман» ыйтусене хускатаççĕ. Партипе комсомол комитечĕсене пĕлтермесĕрех «çав вăхăтри шанчăксăр сăвăçпа» Геннадий Айхипе тĕл пулу ирттереççĕ. Кружокçăсен çакнашкал хĕрÿлĕхĕпе чăрсăрлăхĕ ун чухнехи парти идеологĕсене кăмăла кайсах пĕтмест. Вĕсем çамрăк авторсене ним сăлтавсăрах ятлаççĕ, намăслантараççĕ, ярлăксем çака-çака яраççĕ, хĕсеççĕ. Пĕчченлĕхпе кичемлĕх кĕввисемлĕ сăвăсен авторне В.Егорова пилĕк курс пĕтернĕ хыççăн диплом памасăрах Самар тăрăхне кăларса яраççĕ. Унпа пĕрлех ку инкеке Г.Юмартăн та, В.Чекушкинăн та, А.Алексеев-Рыккан та тÿсме тивет.

Çакă, паллах, институтри пултарулăх юхăмне самаях хавшатать. «Шанчăк» тухма чарăнать.

Кăшт вăхăт иртсен литература кружокĕ тепĕр хут пуçне çĕклет. Ун тавра çĕнĕ вăй чăмăртанать. Акă вĕсем: Вениамин Тимаков, Петĕр Эйзин, Хветĕр Агивер, Борис Романов. Институтран вĕренсе тухнă хыççăн çулсем иртнĕçемĕн çамрăк авторсем хăйсен ăсталăхне туптаса пыраççĕ, ятлă-сумлă çыравçăсем пулса тăраççĕ.

Институтри чăваш чĕлхипе литература кафедри 1960-1967 çулсенче куçăн майпа 243, куçăн мар майпа 179 учитель вĕрентсе кăларать. Вĕсем хамăр патра çеç мар, чăвашсем йышлăн пурăнакан ытти республикăсемпе облаçсене те саланаççĕ.

Республика чăваш кафедрин ĕçне пысăка хурса хаклать. 1967 çулта М.Я. Сироткина Чăваш АССРĕн Ĕç Мухтавĕпе Паттăрлăхĕн кĕнекине кĕртеççĕ, С.П. Горские республика наукин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ ятне параççĕ. М.Я. Сироткин юлашкинчен асăннă хисеплĕ ята кăшт маларах – 1958 çулта илет. 1960 çулта С.П. Горскипе М.Я. Сироткина республикăри çутĕç министерствипе



1962 çулхи çĕртмен 28-мĕшĕ. Вырăс-чăваш уйрăмĕнчи V курс студенчĕсем вĕрентÿçĕсемпе пĕрле.

профсоюз обкомĕн Хисеп хучĕпе чысласçĕ. 1961 çулхи кăрлач уйăхĕнче Мускавра иртекен педагогика институчĕсен хастарĕсен Пĕтĕм Раççейри Канашлăвне аслă шкул директорĕпе К.Е. Евлампьевпа тата партбюро секретарĕпе В.З. Барышниковпа пĕрле М.Я. Сироткин профессора яма йышăнни те ăнсăртран пулман ĕнтĕ.

1967 çулхи авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнче Шупашкарта Чăваш патшалăх университечĕ уçăлать. Çавна май педагогика институтĕнчи историпе филологи факультетне, çав шутра чăваш чĕлхипе литература кафедрине те, унта куçараççĕ. Кафедра ертÿçи М.Я. Сироткин тата С.П. Горский профессорсем, И.П. Павлов, А.С. Канюкова, С.П. Юшков, В.Я. Канюков доцентсем, И.И. Одюков аслă вĕрентÿçĕ çĕнĕ çĕрте ĕçлеме тытăнаççĕ.



1963 çулхи çĕртмен 25-мĕшĕ. Чăваш çыравçисем заочник-студентсем патĕнче.



1967 çулхи çĕртмен 19-мĕшĕ. Чăваш уйрăмĕнчи заочник-студентсем юлашки патшалăх экзаменĕ умĕн. Сулахайран сылтăмалла: пĕрремĕш ретре – П.И. Марков, Р.С. Яргонина, М.М. Смирнова, Е.В. Никитина, Н.Г. Волков; иккĕмĕш ретре – А.И. Мефодьев, А.А. Леонтьева, Р.И. Герасимова, В.Н. Николаев; виççĕмĕш ретре – И.Т. Титов, Е.З. Зиновьева, В.В. Изис, М.Майорова.

## Ялкăшуллă чĕрĕлӳ

Пĕр хушă пушăлăх пулнă хыççăн пединститутра чăваш чĕлхипе литературине вĕрентесси çитмĕлмĕш çулсен вĕçĕнче çĕнĕрен чĕрĕлсе тăрать. 1976 çулта пуçламăш вĕренӳ педагогикипе меслетлĕхĕн факультечĕ уçăлать. Унта чăваш пуçламăш шкулĕ валли те специалистсем хатĕрлеме тытăнаççĕ. Кунти студентсен вĕренӳпе ăслăлăх ĕçне йĕркелес тĕлĕшпе филологи наукисен докторĕ Л.П. Сергеев нумай вăй хурать. 1984-1991 çулсенче вăл малтан пуçламăш вĕрентӳ, кайран чăвашпа вырăс чĕлхисен кафедрисене ертсе пырать. 1988 çулхи авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнче кунта ĕçлеме филологи наукисен докторĕ М.Ф. Чернов килет. 1991 çулта ăна чăвашпа вырăс кафедрине ертсе пыма шанса параççĕ. 1992 çулта çак профессора



1994 çулхи пуш уйăхĕ. Чăваш филологи факультечĕн деканĕ А.И. Мефодьев Пушкăртстанран килнĕ чăваш студенчĕсемпе пĕрле. Вĕсене вырăна кайса экзамен тыттарса вĕренме йышăннă.

çĕнĕрен йĕркеленĕ чăваш чĕлхипе литератури кафедрин ертӳçине лартаççĕ.

1992 çулта педагогика институчĕн филологи факультетĕнче чăваш уйрăмĕ уçăлать. Унта вăтам шкул валли учительсем хатĕрлеме тытăнаççĕ. Çав çулах аслă шкулти мĕн пур факультетсенче факультативлă йĕркепе чăваш чĕлхине вĕрентме пуçлаççĕ. Кăштах вăхăт иртсен, 1995 çулта, шкул çулне çитичченхисен педагогикăпа психологи факультечĕ йĕркеленет. Унта та чăваш педагогĕсем хатĕрлеме тĕллев лартаççĕ. Çавна май çĕнĕ кафедра умне кадрсен ыйтăвĕ çивĕччĕн тухса тăрать. Ку енĕпе кафедра ертӳçи М.Ф. Черновпа Л.П. Сергеев профессорсем çине тăрса ĕçлеççĕ, вĕрентĕве пултаруллă та хастар педагог-ăсчахсене явăçтараççĕ. З.С. Антонова (чăваш литератури меслетлĕхĕ), В.И. Игнатьева (пуçламăш класс меслетлĕхĕ), П.Н. Метин (чăваш литературипе фольклор) педагогсем Республикăри вĕрентӳ институтĕнчен килеççĕ. Валентина Ивановна кафедра çумĕнчи аспирантурăна пĕтерет, питĕ ăнăçлă хӳтĕленет. А.Е. Горшков доцент (чăваш чĕлхи) ăслăлăх тĕпчев институтĕнчен куçать. Е.А. Андреева кафедра çумĕнче 1990 çулта уçăлнă аспирантурăран пĕрремĕш чĕкеç пулса вĕренсе тухать, дис-

сертацине ăнăçлă хӳтĕлет, кайран кафедра ертӳçин çумĕ тата ертӳçи пулнă вăхăтрах чăваш чĕлхин синтаксисне вĕрентет. Е.Ф. Васильева (чăваш чĕлхи), И.Н. Ульянов ячĕллĕ патшалăх университетĕнчен вĕрентсе пенсие тухнăскер, çĕнĕрен хавхаланса кайса хăй çамрăк чух вĕреннĕ тата ĕçленĕ аслă шкула таврăнать. Т.В. Артемьевăна (шкул çулне çитичченхисен меслетлĕхĕ) РСФСР Çутĕç министерствин наци шкулĕсен тĕпчев институчĕн Чăваш лабораторийĕнчен çураçса килеççĕ. Г.Ф. Брусова (чăваш чĕлхи меслетлĕхĕ), вĕрентӳ институчĕн ĕçченĕ, 1994 çулта кафедра çумĕнчи аспирантурăна вĕренме кĕрет, каярах «Чăваш чĕлхи урокĕсенче паллă ятне вĕрентнĕ май ачасен пуплевне аталантарасси» темăпа диссертаци хӳтĕлет. К.И. Николаева, Ишлейри ача-пăча санаторийĕн педагогĕ, кафедрăна 1992 çулта килет, тĕрлĕ факультетсенчи студентсене чăваш чĕлхи вĕрентет. Кафедра специалистсем хатĕрлеме хăйĕн аспирантурипе туллин усă курать. Çулсеренех кунта кусăн тата кусăн мар майпа вĕренме 1-2 çамрăка йышăнаççĕ. Ăслăлăх ертӳçисем – Л.П. Сергеевпа М.Ф. Чернов профессорсем.



1995 çулхи авăн уйăхĕ. Чăваш уйрăмĕнчи II курс студенчĕсем А.И. Мефодьев доцентпа пĕрле.



1996 çулхи пуш уйăхĕ. Чăваш чĕлхипе литература кафедрин членĕсем.

Кафедра чăваш уйрăмĕнчи вĕрентĕве пурнăç ыйтнă пек, наука хушнă пек йĕркелес тесе тăрăшать. Аслă шкулти малта пыракан опыта, çĕнĕ майсемпе меслетсене, ăслайсене хăюллăн ĕçе кĕртет. Çавна май «4» тата «5» паллăсемпе вĕренекенсен йышĕ çулсерен ÿссе пырать.

Чăваш уйрăмĕшĕн 1997 çул уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çак çул кунта куçăн мар майпа та вĕрентме пуçлаççĕ. Кăнтăрлахи уйрăмра пĕрремĕш кăларăм пулать. 42 çамрăк чăваш чĕлхипе литератури учителĕн дипломне алла илет. А.Д. Ахвандеровăпа Н.И. Степановăна тăван факультетрах чăваш чĕлхипе литературине вĕрентме хăвараççĕ.

1992-1997 çулсенче кафедрăра ăслăлăх ĕçĕ çĕнĕ пусăма çĕкленет. Кунта хатĕрленĕ кĕнекесем хушшинче институтпа пĕрлех вăтам шкулпа ача пахчисем валли кăларнисем те йышлă. Филологи наукисен докторĕ Л.П. Сергеев студентсене усă курма «Чăваш диалектологийĕ», «Чăваш чĕлхи», вăтам шкул ачисене усă курма «Сăмах тĕнчи» кĕнекесем тата «Чăваш чĕлхи» справочник кăларать. Доцентсенчен А.Е. Горшковăн «Мĕнле каласан тĕрĕс?» словарь-справочникĕ, Е.Ф. Васильеван «Омонимсен словарĕ», Е.А. Андрееван ыттисемпе пĕрле çырнă «Чăваш чĕлхипе литератури, фольклор, историпе

культура», Т.В. Артемьеван ыттисемпе пĕрле 2-мĕш классем валли хатĕрленĕ «Тăван сăмах» тата «Чăваш чĕлхи», В.И. Игнатьеван вырăс шкулĕн 2-мĕш, 3-мĕш тата 4-мĕш класĕсенче вĕрентмелли «Чăваш сăмахĕ», К.И. Николаеван «Русско-чувашский картинный словарь», З.С. Антонован вырăс шкулĕн 2-мĕшпе 3-мĕш класĕсенче вĕрентмелли «Чăваш сăмахĕ», П.Н. Метинăн «Кулăш литературин çивĕч ыйтăвĕсем», А.И. Мефодьевăн «Алексей Талвир» кĕнекисем, П.Н. Метинпа А.И. Мефодьевăн «Литературăпа халăх сăмахлăхĕн ăнлавĕсем» словарĕ кун çути кураççĕ. 1992 çулта Л.П. Сергеев В.И. Котлеевпа пĕрле çырнă «Чăваш чĕлхи» кĕнекешĕн Чăваш Республикин Патшалăх премине илме тивĕçлĕ пулать. Çавăн пекех вăл тата М.Ф. Чернов профессор Раççей Федерацийĕн Президенчĕн Патшалăх ăслăлăх стипендине илсе тăраççĕ.

Кафедра хăйĕн база шкулĕпе – Красноармейскинчи 2-мĕш вăтам шкулпа – тачă çыхăнса ĕçлет. Унта вăхăтран вăхăта ăслăлăхпа практика конференцийĕсем тата районти учительсемпе тĕл пулусем ирттереççĕ.



1996 çулхи ака уйăхĕ. Факультет канашĕн ларăвĕ.




1997 çулхи ака уйăхě. Çěнěрен чěрěлсе тăнă чăваш уйрăмěнчи пěрремěш юлашки шăнкăрав хыççăн.

Чăваш уйрăмěнче йěркелекен тěрлě енлě интереслě ěçсенчен чи палли вăл – Чăваш чěлхи кунě. Пěрремěш хут вăл 1990 çулта иртет. Малашне те ăна кашни çулах И.Я. Яковлев çуралнă кун тěлěнче уявлаççě. Вăл факультет чиккинчен тухса пěтěм институт уявěн шайне çити çěкленет. Вăл студентсен наци мăнаçлăхне хăпартма пулăшать, тăван халăха, чěлхене тата ÿнере юратас, хисеплес туйăмне ÿстерет.



Чăваш чěлхи кунěнче Г.Н. Григорьев ректор парнине илме яланах кăмăллă.

1990 çулта педагогика институтĕнче чăваш литература кружокĕ тепĕр хут чăмăртанать. Ăна литература пĕрлешĕвĕ теме тытăнаççĕ, «Хунав» ят параççĕ. Литпĕрлешĕве А.И. Мефодьев доцент ертсе пырать.

## Факультет малалла утать

1998 çул педагогика университечĕн историне паллă пулăмпа кĕрсе юлать. Çак çулхи çу уйăхĕн 1-мĕшĕнче кунта чăваш филологи факультечĕ уçăлать. Ăна халăхăмăрăн мухтавлă çутавçи И.Я. Яковлев çуралнăранпа 150 çул çитнине халалласа аслă шкулăн çав çулхи пуш уйăхĕн 27-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе килĕшÿллĕн йĕркелеççĕ. Çавна май «Чăваш чĕлхипе литератури» специальноçа вĕренекен студентсене историпе филологи факультетĕнчен кăларса çĕнĕрен уçăлакан факультета куçараççĕ. Факультет деканĕ пулма чăваш чĕлхипе литератури кафедрин доцентне А.И. Мефодьева çирĕплетеççĕ. Чăваш чĕлхипе литератури кафедрине филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ



1997 çулхи çу уйăхĕ. Чăваш чĕлхипе литератури кафедрин членĕсем.



1999 çулхи ака уйăхĕн вĕçĕ. Факультетри вĕрентӳçĕсем университетри ĕçченсен пултарулăх каçне хутшăннă хыççăн.

Е.А. Андреева ертсе пыма тытăнать. 2000 çулта çак кафедрăран чăваш литератури кафедри уйрăлса тухать. Унăн ертӳçи – педагогика ăслăлăхĕсен кандидачĕ З.С. Антонова доцент. Çĕнĕ кафедрăна аслă шкул ректорĕ Г.С. Сидоров пуçарнипе М.Я. Сироткин ятне параççĕ. Çак çулах факультетра «Чăваш чĕлхипе литератури тата ют çĕр-шыв чĕлхи» специальность уçăлать. 2002 çулта кунти студентсене тепĕр специальноçа – «чăваш чĕлхипе литературине тата вырăс чĕлхипе литературине» – вĕрентме пуçлаççĕ. Тĕпĕр çул ăна кусăн мар уйрăмра та йĕркелеççĕ.

2004 çулта факультетра çĕнĕ улшăнусем пулса иртеççĕ. «Чăваш чĕлхипе литератури тата юриспруденци» специальность уçăлать. Тепĕр кафедра – чăваш чĕлхине вĕрентес меслетлĕх кафедри – хутшăнать. Ăна педагогика ăслăлăхĕсен кандидачĕ В.И. Игнатьева доцент ертсе пыма тытăнать. Чăваш чĕлхи кафедрин пуçлăхĕ – çамрăк ăсчах, филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ Т.В. Денисова, чăваш литература кафедрин – филологи ăслăлăхĕсен докторĕ П.Н. Метин профессор. Çак çулхи ака уйăхĕнче факультета ертсе пыма филологи ăслă-

лăхĕсен кандидатне Е.А. Андреева доцента уйăрса лартаççĕ. Деканăн вĕрентÿ енĕпе ĕçлекен çумĕ унчченхи пекех Н.И. Степанова аслă вĕрентÿçĕ, ăслăлăх енĕпе ĕçлекен çумĕ – педагогика ăслăлăхĕсен кандидачĕ Т.В. Артемьева доцент. Деканăн воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕн тивĕçне филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ В.В. Павлов пурнăçласа пыма тытăнать.

Ятарлă факультет уçăлни тата ăна 1999 çулта çĕнĕ çурта – 5-мĕш вĕренÿ корпусне – куçарни педагогика университетĕнче чăваш чĕлхипе литератури учителĕсене хатĕрлес ĕçе татăклăн вăйлатма лайăх майсем туса парать. Профессорсемпе преподавательсем лекцисемпе хăнăху занятийĕсене ирттернĕ чух вĕрентĕвĕн çивĕч те витĕмлĕ меслечĕсемпе, ку чухнехи вĕрентÿ ăслайĕсемпе, техника хатĕрĕсемпе, кăтарту пособийĕсемпе анлăн усă кураççĕ. Студентсем вĕренÿре лайăх ĕлкĕрсе пыраççĕ.



2001 çулхи çĕртмен 23-мĕшĕ. Чăваш ен Раççейпе пĕрлешнĕренпе 450 çул çитнин уявĕ. Киров облаçĕнчен килнĕ хăнасене кĕтсе илетпĕр.

Вăтам балл, тĕпрен илсен, кашни çулах «4» ытла пулса пырать. Тĕслĕхрен, 2002-2003-мĕш вĕренӳ çулĕнче 4,27 балл пулнă. Ку вăл, университечĕпе илсен, 4-мĕш вырăн. Студентсем вĕренсе тухнă чух патшалăх экзаменĕсене ăнăçлă тытаççĕ, хăйсем çирĕп те тарăн пĕлӳ илнине кăтартса параççĕ. 1998 çулта кăнтăрлахи уйрăмран 54 çамрăк вĕренсе тухнă, вĕсенчен 3-шĕ хĕрлĕ диплом илнĕ. 1999 çулта 56 çынран 9-шĕ, 2000 çулта 51 çынран 8-шĕ, 2001 çулта 51 çынран 6-шĕ, 2002 çулта 60 çынран 13-шĕ, 2003 çулта 54 çынран 8-шĕ, 2004 çулта 38 çынран 7-шĕ хĕрлĕ дипломсене тивĕçнĕ. 2002 çулта куçăн мар уйрăмра пĕрремĕш кăларăм пулнă. Вĕренсе тухнă 32 çынран 23-шĕ комплекслă экзаменсене «4» тата «5» паллăсемпе тытнă, диплом ĕçĕсене питĕ лайăх паллăсемпе хӳтĕленĕ, пĕр çын хĕрлĕ диплом илме тивĕçнĕ пулнă. 2003 çулта куçăн мар уйрăмран вĕренсе тухнă 32 çынран 2-шĕ, 2004 çулта  40 çынран 2-шĕ хĕрлĕ дипломсем илнĕ.



2002 çулхи çуркунне. Кафедрăсен ĕçченĕсем Тутарстанри Çĕпрел районĕнчи чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенсем патĕнче хăнара.




2002 çулхи çу. Факультетри пултарулăх ушкăнĕ Патăрьел районĕнчи Еншик ялĕн уявĕнче.

Факультетăн юлашки тапхăрти çитĕнĕвĕсем чуна савăнтармасăр тăма пултараймаççĕ. Акă вĕсем, унăн 2003-2004 вĕренӳ çулĕнчи кăтартăвĕсем: кăнтăрлахи уйрăмри бюджет системинчи 203 студентран 99,5 процентчĕ вĕренӳре ĕлкĕрсе пынă. Вĕсенчен 168-ĕшĕ «4» тата «5» паллăсемпе вĕреннĕ. Ку вăл 83,6 процентпа танлашать. Вун икĕ факультет хушшинче – чи пысăк кăтарту. Шакăр «3»-пе вĕренекенсем пачах та пулман. Вăтам балл – 4,42, рейтинг – 84,0. Пĕрремĕш курсри 34 çамрăкран вĕренӳре ĕлкĕрсе пыраймanни пĕрре те пулман, 88,2 процентчĕ «4» тата «5» паллăсем çеç илнĕ. Вĕсен вăтам балĕ 4,47. Ку вăл – университетчĕпе пĕрремĕш кăтарту. Куçăн мар уйрăмри лару-тăру та япăх мар. 154 студентран 98 процентчĕ вĕренӳре ĕлкĕрсе пынă, 44,3 процентчĕ «4» тата «5» паллăсем илсе тăнă. Кунти вăтам балл – 4,8. Университетчĕпе – 3-мĕш вырăн.

Хальхи вăхăтра факультетăн кăнтăрлахи уйрăмĕнче 237, куçăн мар уйрăмĕнче 137 çын вĕренет. Çав шутра тӳлесе вĕренекенсем – 61 студент.

Деканатпа кафедрăсем республика тулашĕнчи чăваш ачисене вĕрентесси çине те тимлĕ пăхаççĕ. Пушкăртстана




2002 çулхи юпа уйăхĕн 25-мĕшĕ. Марий Эл çĕрĕнчен килнĕ хăнасене саламлатпăр.

кайса экзамен тыттарса йышăннă 7 çамрăк 1998 çулта диплом илсе тăван çĕр-шывне таврăннă, унта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентме тытăннă. Кафедра çавăн пек меслетпех Пушкăртстанри 7 чăваш хĕрне пуçламăш классен факультетĕнче вĕренме илсе килнĕ. Вĕсем те 1997 çулта диплом илсе тăван ене таврăннă. Çакнашкал тĕслĕх чăваш пединститучĕн кун-çулĕнче пĕрремĕш мар. Тахçан маларах, 1964 çулта, С.П. Горский профессор асăннă республикăна кайса вырăнта экзамен тыттарса унти çамрăксен пĕр ушкăнне Шупашкара вĕренме илсе килнĕ пулнă. Юлашки вăхăтра факультет çавăн пекех Пенза тăрăхĕнчен килнĕ 4 хĕре аслă пĕлӳ панă. Паянхи кун тĕлне чăваш филологи факультетĕнче Тутарстанпа Пушкăртстан тата Самар тăрăхĕнчен килнисем 35-кĕн вĕренеççĕ.

Хальхи вăхăтра чăваш филологи факультетĕнче 19 çын ĕçлет. Çав шутра профессор-ăслăлăх докторĕ – 3, доцент-ăслăлăх кандидачĕ – 8, аслă вĕрентӳçĕ-ăслăлăх кандидачĕ – 3, вĕрентӳçĕ-ăслăлăх кандидачĕ – 1, доцент – 1. Вĕсем çаксем: филологи ăслăлăхĕсен докторĕсем Л.П. Сергеев, Н.П. Петров, П.Н. Метин профессорсем, филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕсем А.Е. Гор-

шков, А.И. Мефодьев, Е.А. Андреева, Е.А. Лебедева доцентсем тата Т.В. Денисова, А.Д. Ахвандерова, И.Г. Яковлева аслă вĕрентӳçĕсем, педагогика ăслăлăхĕсен кандидачĕсем З.С. Антонова, В.И. Игнатьева, Т.В. Артемьева, Г.Ф. Брусова доцентсем, филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ В.В. Павлов, К.И. Николаева доцент тата ыттисем те. Штатра вăй хуракан вĕрентӳçĕсенчен 88 проценчĕ – ăслăлăх докторĕсемпе кандидачĕсем, профессорсемпе доцентсем.

Факультет валли кадрсем хатĕрленĕ çĕрте чăваш чĕлхипе литератури кафедрисем çумĕнче уçнă аспирантурăн пĕлтерĕшĕ те пысăк. Вăл çак специальноçсемпе ĕçлет: «10.02.02 – РФ халăхĕсен чĕлхисем (чăваш чĕлхи)», «13.00.02 – чăваш чĕлхине вĕрентессин теорийĕпе меслетлĕхĕ», «10.01.02 – РФ халăхĕсен литератури (чăваш литератури)». Юлашки пилĕк çул хушшинче аспирантурăран 10 çын вĕренсе тухнă, вĕсенчен 6-шĕ кандидат диссертацийĕ хӳтĕленĕ. Хальхи вăхăтра аспирантурăра 6 çын вĕренет. Вĕсен ăслăлăх ертӳçисем – филологи наукисен докторĕсем Л.П. Сергеевпа П.Н. Метин. 2002-2005 çулсенче факультетра «Чăваш чĕлхине вĕрентессин теорийĕпе меслетлĕхĕ» тата «Чăваш чĕлхи» специальноçсемпе кандидат диссертацийĕ хӳтĕлеттерекен вăхăтлăх диссертаци канашĕн ларăвĕ тăвата хутчен пулса иртнĕ. Унта 5 диссертаци хӳтĕленĕ.



2003 çулхи акан 25-мĕшĕ. И.Я. Яковлев палăкĕ умĕнче.

Факультетра кафедрăсен профилĕпе икĕ ăслăлăх çулйĕрĕ палăртса хунă. Педагогсем тĕпчев ĕçне çӳллĕ шайра туса пыраççĕ. 1997-2004 çулсенче 67 вĕренӳ кĕнекипе пособийĕ, 1 хрестомати, 2 монографи, ăслăлăх ĕçĕсен 7 пуххи, 70 яхăн вĕрентӳпе меслетлĕх пособийĕ, 300 ытла статья кăларнă.

Юлашки пилĕк çул хушшинче факультетра 8 ăслăлăхпа практика конференцийĕ ирттернĕ. Паллăраххисем иккĕ: «Тĕрĕк чĕлхисен историйĕпе диалекчĕсем ытти чĕлхесемпе çыхăнура тăни» тĕнче симпозиумĕ (2004), «Чăваш филологийĕн чи кирлĕ ыйтăвĕсем» республика ăслăлăхпа практика конференцийĕ (2004). Конференцисенче тунă докладсемпе пĕлтерӳсене пухса 6 кĕнеке кăларнă. Кафедрăсен ĕçченĕсем 2002-2003 çулсенче пысăк йышпа Тутарстанри Пăва, Çĕпрел тата Çарăмсан районĕсене кайса килнĕ. Унти чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенсемпе тĕл пулнă, пĕрлехи семинарсем ирттернĕ. 2003-2004 çулсенче А.И. Мефодьевпа П.Н. Метин Самар тăрăхĕнче, В.И. Игнатьевăпа Т.В. Денисова Пушкăртстанра пулнă, унти чăваш шкулĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе кăсăкланнă.

Факультетăн база шкулĕсем пур. Вĕсем – Г.С. Лебедев ячĕллĕ Чăваш наци вĕренӳ центрĕ, Элĕкри, Шупашкар районĕнчи Çĕньялти вăтам шкулсем. Педагог-



Дипломçăсемшĕн Л.П. Сергеев профессорăн кашни сăмахĕ ахах пĕрчи.



Библиотека – факультет студенчĕсен юратнă вырăнĕ.

ăсчахсем вĕсенче сăнавпа шырав ĕçĕсем тăваççĕ, вĕренӳ кĕнекисемпе пособийĕсене тата программисене хатĕрлеççĕ, статьясем çыраççĕ, студентсен педагогика практикине ирттереççĕ.

Л.П. Сергеевпа Н.П. Петров тата П.Н. Метин профессорсем, З.С. Антонова, В.И. Игнатьева, Т.В. Артемьева, Е.А. Андреева доцентсем Чăваш Республикинчи тата чăвашсем йышлăн пурăнакан ытти вырăнсенчи вĕренӳ заведенийĕсем валли чăваш чĕлхипе литератури ыйтăвĕсемпе кăларнă вĕрентӳпе меслетлĕх комплекчĕсен авторĕсем шутланаççĕ.

Деканатпа кафедрăсем студентсене воспитани парасси, вĕсен культурăллă канăвне йĕркелесси çинчен те манса каймаççĕ. Факультет каччисемпе хĕрĕсем литературăпа ӳнер тата краеведени музейĕсем, кĕнеке палатипе наци библиотеки ирттерекен пĕр уявран та юлмаççĕ. Сăмахран, вĕсем К.В. Иванов ячĕллĕ литература музейĕ юлашки вăхăтра И.Я. Яковлева, Çеçпĕл Мишшине, Митта Ваçлейне, Петĕр Хусанкая, Нестĕр Янкаса, Алексей Талвира, Алексей Воробьева, Геннадий Айхие тата ытти паллă çыравçăсене халалласа йĕркеленĕ куравсемпе пысăк çĕкленӳпе паллашнă. 2003-2004-мĕш çулсенче кăна студентсем сăнарлăхпа ӳнер тĕлĕшри курмалли-пăхмалли вырăнсенче 50 хут ытла пулнă. 2004 çулта факультет çамрăкĕсем тĕрлĕ театрсенче 28 спектакль курнă, музей-

сенчи 3 экспозицие кайса курнă. 90-мĕш çулсен вĕçĕнче факультет «Сăвар» халăх ташшин ансамблĕпе тачă çыхăну тытма тытăнать. Пирĕн студентсем унăн кашни çĕнĕ программипе чи малтан палашаççĕ. Çакна палăртма та кăмăллă: Марина Багадерова ансамблĕн çав çулсенчи яланхи ташăçи шутланать. Хăйĕн коллективĕпе пĕрле икĕ хутчен Мускавра пулать, Чулхулара, Чĕмпĕрте, Йошкар-Олара тата ытти хуласенче хăйĕн пултарулăхне кăтартнă. Ансамбль ертÿçи А.Н. Музыкантов факультет никĕсĕ çинче «Тивлет» ятлă ташă ушкăнĕ йĕркелет. Унта çÿрекен 12 çамрăкран 7-шĕ – чăваш филологи факультечĕн студенчĕсем. Факультет К.В. Иванов ячĕллĕ Чăваш академи драма театрĕпе питĕ туслă. Вĕсем пĕр-пĕринпе çырса çирĕплетмен хăйне евĕр килĕшÿ тунă. Актерсем факультетри уявсене хутшăнаççĕ, студентсемпе тĕл пулаççĕ. Асăннă театрăн артистки Н.М. Кириллова темиçе çул ĕнтĕ кунта «усăмлă та илемлĕ сăмах» предмета вĕрентет. Кашни занятиех пысăк хавхаланупа иртterет. Студентсем вара театрăн çĕнĕ спектаклĕсене йышăнма, вĕсене сÿтсе явса хак пама, театр кун-çулĕпе ĕçĕ-хĕлне тĕпчеме тата халăх хушшине сарма хутшăнаççĕ.



Иртни, хальхи, пуласси... Факультет ÿсĕмĕ курăмлă, палăртнă ĕçсем те чылай-ха.

Чăваш студенчĕсем Хусанти педагогика университечĕн тутар филологи факультетĕнчи тантăшĕсемпе çыхăну йĕркелесе янă. 2004 çулхи чӳк уйăхĕнче хусансем Шупашкара килсе курнă. Вĕсене пирĕн студентсем ăшшăн йышăннă, тĕл пулусем çӳллĕ шайра, питĕ усăллă иртнĕ. Факультетра фольклор ушкăнĕ (илемлĕх ертӳçи А.З. Федоров), ташă ушкăнĕ (ертӳçи Г.В. Игнатьева),



Чăваш юрри, ташши, тумĕ... Пурте куçа илĕртет, чуна ăшăтать.

драма кружокĕ (ертӳçи Н.М. Кириллова артистка) пур. «Хунав» литература пĕрлешĕвĕ (ертӳçи А.И. Мефодьев) хăйĕн унччечхи ырă йăли-йĕркисене малалла хастарлăн тăсать. Паян унта 20-е яхăн çамрăк çӳрет. Вĕсем – тĕрлĕ факультетсен студенчĕсем, вĕрентӳçĕсем, нумай жанра кăмăллакансем. «Хунавçăсем» тăтăшах пĕрле пуçтарăнса хăйсем çырнă хайлавсене сӳтсе яваççĕ, теори ыйтăвĕсене тишкереççĕ, литература темипе кăларнă видеокассетăсене пăхса тухаççĕ, паллă чăваш çыравçисемпе тата ӳнерçисемпе тĕл пулаççĕ. Вĕсем «Хунав» хаçат кăлараççĕ, литература каçĕсемпе уявĕсене ирттереççĕ.



2005 çулхи пуш уйăхĕн 30-мĕшĕ. «Хунав» литература пĕрлешĕвĕн ларăвĕ пырать.

2004 çулхи чӳк уйăхĕн 3-мĕшĕнче, сăмахран, кунта пушкăрт халăх поэчĕ Мустай Карим 85 çул тултарнă ятпа чаплă уяв йĕркеленĕ. Унта чăваш çыравçисем йышлăн хутшăннă.



2005 çул. Факультетăн туслă йышĕ.

Çамрăк авторсен хайлавĕсем педуниверситетăн «Педвузовец» хаçатĕнче тăтăшах пичетленеççĕ. Çавăн пекех «Самант», «Тăван Атăл», «Ялав» журналсенче, «Тантăш» хаçатра пĕр хут çеç мар çапăнса тухнă. Чăвашрадиопа телевидени передачисенче янăранă. 1998 çултанпа çамрăк çыравçăсем «Хунав» ятлă альманахăн 4 кĕнекине кăларнă.

Çапла, И.Я. Яковлев ячĕллĕ Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн чăваш филологи факультечĕ малалла çултан-çул сулмаклăн утать, çĕнĕ çитĕнӳсем патнелле ăнтăлать.

## ЧӐВАШ УЙРӐМӖНЧЕ ВӖРЕННӖ ӐСЛӐЛӐХ ДОКТОРӖСЕМПЕ ПРОФЕССОРСЕМ

**Одюков Иван Ильич** – профессор;

**Петров Николай Петрович** – филол. ӑслӑл. докторӗ, профессор;

**Сергеев Виталий Иванович** – филол. ӑслӑл. докторӗ, профессор;

**Сергеев Леонид Павлович** – филол. ӑслӑл. докторӗ, профессор;

**Сироткин Михаил Яковлевич** – филол. ӑслӑл. докторӗ, профессор;

**Хлебников Геннадий Яковлевич** – профессор;

**Чернов Мефодий Федорович** – филол. ӑслӑл. докторӗ, профессор.

## ТАВА ТИВĔÇЛĔ ЯТСЕМПЕ ПАЛЛĂСЕМ ИЛНĔ ВĔРЕНТӲÇĔСЕМ

*СССР Çут ĕç отличникĕсем*

Чернов Мефодий Федорович (1957)
Канюкова Александра Семеновна (1980)
Сергеев Леонид Павлович (1986)

*Раççей Федерацийĕн ăслăлăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕсем*

Сироткин Михаил Яковлевич (1970)
Сергеев Леонид Павлович (1999)

*Раççей Федерацийĕн профессиллĕ аслă пĕлĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕ*

Сергеев Леонид Павлович (2000)

*Чăваш АССР Ĕç Мухтавĕпе Паттăрлăхĕн кĕнекине кĕртнĕ*

Сироткин Михаил Яковлевич (1967)

*Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕсем*

Одюков Иван Ильич (1973)
Павлов Иван Павлович (1988)

*Чăваш Республикин ăслăлăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕсем*

Егоров Василий Георгиевич (1954)
Сироткин Михаил Яковлевич (1958)
Горский Семен Петрович (1967)
Сергеев Леонид Павлович (1990)
Чернов Мефодий Федорович (1992)
Петров Николай Петрович (1993)

*Чăваш Республикин вĕрентĕвĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕсем*

Антонова Зоя Серафимовна (2003)
Васильева Елизавета Федоровна (2003)

*Чăваш Республикин ӳнерĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ*

Данилов Дмитрий Данилович (1961)

*Чăваш Республикин культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕсем*

Горшков Анатолий Ермолаевич (1980)
Мефодьев Александр Иванович (2000)

*Чăваш Республикин Патшалăх премийĕн лауреачĕсем*

Канюков Владимир Яковлевич (1988)
Одюков Иван Ильич (1988)
Сергеев Леонид Павлович (1992)

## ВЁСЕМ ПИРЁН ПАТРА ВЁРЕННЁ, КАЙРАН ТАВА ТИВЁÇЛЁ ЁÇЧЕН ЯТНЕ ИЛНЁ*

*СССР халăха вĕрентес ĕç отличникĕ*

Карягин Арсений Афанасьевич (1970)

*Раççей Федерацийĕн аслă шкулĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ*

Сидоров Георгий Сидорович (1999)

*Раççей Федерацийĕн шкулĕн тава тивĕçлĕ учителĕ*

Карягин Арсений Афанасьевич (1960)

*Раççей Федерацийĕн культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕсем*

Иванов Ипполит Иванович (1968)
Терентьев Николай Терентьевич (1976)
Давыдов-Анатри Василий Иванович (1976)
Карягин Сергей Афанасьевич (1996)
Казанов Аркадий Петрович (1988)

*Чăваш Республикин аслă шкулĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ*

Котлеев Виталий Иванович (1980)

*Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ*

Анисимов Геннадий Александрович (1987)

*Чăваш Республикин халăха вĕрентес ĕçĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕсем*

Сидоров Георгий Сидорович (1994)
Мышкин Зиновий Филиппович (1994)

*Чăваш Республикин халăх поэчĕсем*

Алга Александр Егорович (1970)
Давыдов-Анатри Василий Иванович (1990)
Галкин Александр Алексеевич (1997)

*Чăваш Республикин халăх писателĕсем*

Илпек Микулайĕ (Ильбеков Николай Филиппович) (1970)

Терентьев Николай Терентьевич (1980)
Хветĕр Уяр (Афанасьев Федор Ермилович) (1990)
Юхма Михаил Николаевич (1993)

*Чăваш Республикин культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕсем*

Давыдов-Анатри Василий Иванович (1967)
Галкин Александр Алексеевич (1977)
Юхма Михаил Николаевич (1982)
Хветĕр Уяр (Афанасьев Федор Ермилович) (1984)
Казанов Аркадий Петрович (1985)
Карягин Сергей Афанасьевич (1986)
Семенов Демьян Филиппович (1987)
Геннадий Юмарт (Трофимов Геннадий Федорович) (1988)
Валентина Элпи (Андреева Валентина Андреевна) (1989)
Александр Аслут (Николаев Александр Николаевич) (1990)
Игнатьев Василий Герасимович (1991)
Тимаков Вениамин Петрович (1993)
Петĕр Эйзин (Дмитриев Петр Егорович) (1994)
Валем Ахун (Максимов Валентин Осипович) (1996)
Гордеев Денис Викторович (2000)
Илларионова Маргарита Васильевна

*Чăваш Республикин ӳнерĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕсем*

Терентьев Николай Терентьевич (1968)
Хветĕр Агивер (Коновалов Федор Георгиевич) (1992)

*Чăваш Республикин Патшалăх премине илнисем*

Терентьев Николай Терентьевич (1970)
Геннадий Юмарт (Трофимов Геннадий Федорович) (1988)
Котлеев Виталий Иванович (1992)

---

* Хăш-пĕр список тулли мар.

# ЧĂВАШ (ЧĂВАШ ТАТА ВЫРĂС) УЙРĂМĔНЧЕН ВĔРЕНСЕ ТУХНИСЕМ – ВĔРЕНТŸ КĔНЕКИСЕН АВТОРĔСЕМ

1. **Андреев Иван Андреевич**, филол. наукисен докторĕ, профессор

*Шкул валли:*

1. Чăваш чĕлхи. Вырăс шкулĕн 7-мĕш класĕ валли. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1999 (авт. пĕрле).
2. Чăваш сăмахĕ. Вырăс шкулĕн 5-мĕш класĕ валли. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2000 (авт. пĕрле).
3. Чăваш чĕлхи. Вырăс шкулĕн 9-мĕш класĕ валли. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2000 (авт. пĕрле).
4. Чăваш чĕлхи. Синтаксис. 8-9 классем валли. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2001.
5. Чăваш чĕлхи. Синтаксис. VIII–IX кл. валли. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1978–1993 (авт. пĕрле).
6. Чăваш чĕлхи. Чăваш шкулĕн 10-11-мĕш класĕсем валли. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2003.

*Аслă шкул валли:*

1. Чăваш пунктуацийĕ. Вĕренÿ пособийĕ. – Шупашкар, 1989.
2. Чăваш синтаксисĕн ыйтăвĕсем. 1-мĕш пайĕ. – Шупашкар: Чăвашиздат, 1973.
3. Чăваш синтаксисĕн ыйтăвĕсем. 2-мĕш пайĕ. – Шупашкар: Чăвашиздат, 1975.
4. Причастие в чувашском языке. – Чебоксары: Чувашгосиздат, 1961.
5. Чувашский язык. Практический курс: Учеб. пособие для начинающих. 2-е изд. – Чебоксары: Чув. кн. изд-во, 2002.
6. Чувашский язык. Учеб. пособие. – Чебоксары: Чув. кн. изд-во, 1996.

2. **Анисимов Геннадий Александрович**, филол. наукисен докторĕ, профессор

*Шкул валли:*

1. Изучение русских частей речи в 4-6-х классах чувашской школы. Глагол. Имя числительное. Местоимение. – Чебоксары: Чув. кн. изд-во, 1975.

2. Изучение русского имени существительного и имени прилагательного в 4-5-х классах чувашской школы. Методическое пособие для учителей. – Чебоксары: Чув. кн. изд-во, 1973.
3. Изучение синтаксиса русского языка в чувашской школе. Методическое пособие для учителей. – Чебоксары: Чув. кн. изд-во, 1981.
4. Обучение морфологии русского языка в чувашской школе. Методическое пособие. – Чебоксары: Чувашкнигоиздат, 1984.

*Аслă шкул валли:*

1. Синтаксис сложного предложения: Учебное пособие для филол. факультетов университетов. – Чебоксары: Изд-во ЧГПУ, 2002.

3. **Антонова Зоя Серафимовна**, пед. наукисен кандидачĕ, доцент

*Шкул валли:*

1. Пĕрле вулар-ха. Хрестомати. Ашшĕ-амăшĕсемпе ача садĕнчи воспитательсем валли. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1-мĕш кĕн. 1986; 2-мĕш кĕн. 1987; 3-мĕш кĕн. 1990.
2. Килти вулав урокĕсем. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1989.
3. Чăвашла калаçма вĕренетпĕр. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1992 (авт. пĕрле).
4. Чăваш сăмахĕ. Вырăс шкулĕн 1-мĕш класĕ валли. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1992–2004 (авт. пĕрле).
5. Чăваш сăмахĕ. Вырăс шкулĕн 2-мĕш класĕнче чăвашла вĕренмелли кĕнеке. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1993, 1998, 2001 (авт. пĕрле).
6. Тăван литература. 6-мĕш класăн вĕренӳпе вулав кĕнеки. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2001 (авт. пĕрле).
7. Тăван литература. 7-мĕш класăн вĕренӳпе вулав кĕнеки. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2002 (авт. пĕрле).

*Аслă шкул валли:*

1. Чăваш литератури меслетлĕхĕ. Хăнăху ĕçĕсем. – Шупашкар: ЧППУ, 2002.

2. Йӑлана кӗмен уроксем. Вӗренӳ пособийӗ. – Шупашкар: ЧППУ, 2002.
3. Методика преподавания чувашской литературы в 10-11 классах русскоязычной школы. Учебное пособие. – Чебоксары: ЧГПУ, 2003.
4. Монографиллӗ темӑна шкулта вӗрентесси. Вӗренӳ пособийӗ. – Шупашкар: ЧППУ, 2004 (авт. пӗрле).

4. **Васильева Елизавета Федоровна**, филол. наукисен кандидачӗ, доцент

*Аслӑ шкул валли:*

1. Хальхи чӑваш чӗлхи. Лексикологи. – Шупашкар: ЧПУ изд-ви, 1994.
2. Хальхи чӑваш чӗлхи. Лексикологи. Фразеологи. Лексикографи. Вӗренӳ пособийӗ. – Шупашкар: ЧППУ изд-ви, 2002.
3. Хальхи чӑваш чӗлхи. Фонетика. Орфоэпи. Графика. Орфографи: Практика ӗҫӗсемпе меслет кӑтартӑвӗсем. – Шупашкар: ЧППУ изд-ви, 2001.

5. **Горшков Анатолий Ермолаевич**, филол. наукисен кандидачӗ, доцент

*Аслӑ шкул валли:*

1. Чӑваш чӗлхи лексикин аталанӑвӗ. Совет тапхӑрӗ. – Шупашкар, 1960.
2. Роль русского языка в развитии и обогащении чувашской лексики. – Чебоксары, 1963.
3. Сӑмах пултӑр уҫӑмлӑ, шухӑш пултӑр витӗмлӗ. – Шупашкар, 1981.
4. Чӑваш чӗлхи: лексика, фразеологи, пуплев культури. – Шупашкар, 1997.

6. **Канюков Владимир Яковлевич**, филол. наукисен кандидачӗ, доцент

*Шкул валли:*

1. Тӑван литература. Учебник-хрестомати. 8-мӗш класс валли. – Шупашкар: Чӑвашгосиздат, 1962–1970 (авт. пӗрле).
2. Тӑван литература. Учебник-хрестомати. 7-мӗш класс валли. – Шупашкар: Чӑваш кӗн. изд-ви, 1973–1985 (авт. пӗрле).

3. Тăван литература. 8-мĕш класс валли. – Шупашкар: Чăвашгосиздат, 1962–1970.

*Аслă шкул валли:*

1. Ача-пăча сăмахлăхĕ. Сăвă-юрă. Юмах-халап. – Шупашкар: Чăвашгосиздат, 1964.
2. От фольклора к письменности (Ранняя чувашская литература и народное творчество). – Чебоксары: Чувашкнигоиздат, 1971.
3. Развитие литературы и народные художественные традиции. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1979.

7. **Канюкова Александра Семеновна**, филол. наукисен кандидачĕ, доцент

*Аслă шкул валли:*

1. Чăваш диалектологийĕн хрестоматийĕ. Филолог-студентсемпе учительсем валли хатĕрленĕ вĕренў пособийĕ. – Шупашкар, 1970.
2. Чăвашла тĕрĕс калаçар. Вĕренў пособийĕ. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 1959, 1968, 1975, 1994.
3. Чувашская диалектология. Учебное пособие. – 2-ое изд. – Чебоксары: Изд-во ЧГУ, 2004.

8. **Лукоянов Герольд Васильевич**, филол. наукисен кандидачĕ, доцент

*Шкул валли:*

1. Савăнăç кĕнеки. Вырăс шкулĕн 1-мĕш класĕ валли. – Шупашкар, 1986, 1988.
2. Тăван чĕлхе. Вырăс шкулĕн 1-мĕш класĕ валли. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1987.
3. Чăваш чĕлхи. 4-мĕш класс валли. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1992.
4. Чăваш чĕлхи. Морфологи. 5–6-мĕш классем валли. – Шупашкар: ЧАССР кĕн. изд-ви, 1971–1979.
5. Чăваш чĕлхи: 4-мĕш класс валли. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2000.

9. **Мефодьев Александр Иванович**, филол. наукисен кандидачĕ, доцент

*Шкул валли:*

1. Литературăпа халăх сăмахлăхĕн ăнлавĕсем. Шкул словарĕ. – Шупашкар, 1997 (авт. пĕрле.).
2. Шăнкăр-шăнкăр шыв. Çыравçă-ăсчах чăваш ачипе калаçни. Вĕренӳ пособийĕ. – Шупашкар, 2003.

*Аслă шкул валли:*

1. Тĕрĕк халăхĕсен литератури. Вĕренӳ пособийĕ. – Шупашкар: ЧППУ, 2002.
2. Атăлпа Урал тăрăхĕнчи халăхсен ача-пăча литератури. Вĕренӳ пособийĕ. – Шупашкар: ЧППУ, 2003.
3. Чăваш ача-пăча литератури. Вĕренӳ пособийĕ. – Шупашкар: ЧППУ, 1994.
4. Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Вĕренӳ пособийĕ. – Шупашкар: ЧППУ, 1994.
5. Алексей Талвир. Пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ. Вĕренӳ пособийĕ. – Шупашкар: ЧППУ, 1996.

10. **Никитин Виталий Петрович**, филол. наукисен кандидачĕ, доцент

*Шкул валли:*

1. Чăваш сăмахлăхĕ. 8-мĕш класăн вĕренӳпе вулав кĕнеки. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1994 (авт. пĕрле).
2. Чăваш сăмахлăхĕ. Учебник-хрестомати. 9-мĕш класс валли. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1990, 1994 (авт. пĕрле).
3. Чăваш литератури. 8-мĕш класăн вĕренӳпе вулав кĕнеки. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1986, 1994, 2003 (авт. пĕрле).
4. Чăваш литератури. 9-мĕш класăн вĕренӳпе вулав кĕнеки. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2003.
5. Чăваш сăмахлăхĕ: 10-мĕш класăн вĕренӳпе вулав кĕнеки: 2-мĕш пай. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1996.
6. Чăваш сăмахлăхĕ: 10-мĕш класăн вĕренӳпе вулав кĕнеки. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1993.

11. **Одюков Иван Ильич**, филол. наукисен кандидачĕ, профессор

*Шкул валли:*

1. Тăван литература. 4-мĕш класс валли. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1970–1979 (авт. пĕрле).
2. Тăван литература. 4-мĕш класс валли. – Шупашкар: Чăваш АССР кĕн. изд-ви, 1971–1980.

*Аслă шкул валли:*

1. Совет саманинчи чăваш халăх сăмахлăхĕ. Студентсене вĕренмелли кĕнеке. – Шупашкар: ЧПУ, 1975.
2. Классикăлла чăваш литературинчи халăхлăхпа фольклор çыхă-нăвĕсем. – Шупашкар: ЧПУ, 1973 (авт. пĕрле).
3. Чăваш халăх сăмахлăхĕ. 4-мĕш том. Юрăсем. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1979.
4. Чувашские народные песни социального протеста и революционной борьбы. – Чебоксары: Чувашкнигоиздат, 1965.

12. **Павлов Иван Павлович**, филол. наукисен кандидачĕ, доцент

*Шкул валли:*

1. Чăваш чĕлхи. 5 класс учебникĕ. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1970–1993.
2. Чăваш чĕлхи: Морфологи. 6-7 классем валли. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1978–1992 (авт. пĕрле).
3. Чăваш чĕлхин грамматики. 1-мĕш пайĕ. Фонетикăпа морфологи. 5-6-мĕш классем валли. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1963–1979. (авт. пĕрле).

*Аслă шкул валли:*

1. Хальхи чăваш литература чĕлхи. Морфологи.– Шупашкар: Чăвашиздат, 1965.
2. Хальхи чăваш литература чĕлхи. Хăнăхтарусен пуххи. Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 1970.

13. **Петров Николай Петрович**, филол. наукисен докторĕ, профессор

*Шкул валли:*

1. Революцичченхи чăваш писателĕсен произведенийĕсем. Хрестомати. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1962.
2. Чăваш чĕлхи. 8 класс валли. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1974 – 1978 (авт. пĕрле).
3. Чăваш чĕлхи. 7-8 классем валли. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1979 – 1981 (авт. пĕрле).

*Аслă шкул валли:*

1. Чăваш литература чĕлхин историйĕ: Яковлевченхи тапхăр. Вĕренӳ пособийĕ. – Шупашкар: ЧПУ, 1978.
2. Чувашская терминология. Учебное пособие. – Чебоксары: ЧГУ, 1979.
3. Развитие фонетики и норм произношения чувашского языка. – Чебоксары: ЧГУ, 1982.
4. Нормализация чувашского литературного языка. Учебное пособие. – Чебоксары: ЧГУ, 1988.

14. **Петрова Роза Николаевна**, пед. наукисен кандидачĕ, доцент

*Шкул валли:*

1. Ача-пăча сăмахлăхĕ. Хрестомати. Пуçламăш классем валли. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1993.
2. Тăван сăмах. 4-мĕш класс. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1992, 1998 (авт. пĕрле).

15. **Сергеев Виталий Иванович**, филол. наукисен докторĕ, профессор

*Аслă шкул валли:*

1. Морфемика тата морфонологи: Лекцисен конспекчĕ. – Шупашкар: ЧПУ изд-ви, 2001.
2. Сăмах пулăвĕ. Ят пару. Вĕренӳ пособийĕ. – Шупашкар: ЧПУ изд-ви, 1998.
3. Хальхи чăваш литература чĕлхи: Лексика тата лексикологи. Семантика тата семасиологи. Вĕренӳ пособийĕ. – Шупашкар: ЧПУ изд-ви, 2000.

4. Халыхи чăваш чĕлхи. Морфологи. Вĕренӳ кĕнеки. – Шупашкар: ЧПУ изд-ви, 1992.
5. Чăваш чĕлхинчи ярала ячĕ. Вĕренӳ пособийĕ. – Шупашкар, 1990.

16. **Сергеев Леонид Павлович**, филол. наукисен докторĕ, профессор

*Шкул валли:*

1. Учебник чувашского языка. Для VIII класса. – Чебоксары, 1974. Всего 6 изданий (в соавт.).
2. Чувашское слово. Учебное пособие для факультативных занятий. 7-10-ые классы. – Чебоксары, 1978.
3. Чувашский язык. Учебник для 7-8-х классов. – Чебоксары, 1981-1993. 6 изданий (в соавт.).
4. Грамматика вăййисем. – Шупашкар, 1982.
5. Чувашский букварь. Для 1-го класса. – Чебоксары, 1985. Всего 9 изданий (в соавт.).
6. Учебник чувашского языка для 3-го класса. – Чебоксары, 1990. Всего 12 изданий (в соавт.).
7. Учебник чувашского языка для 2-го класса. Всего 11 изданий. 11-ое изд. – Чебоксары, 1990 (в соавт.).
8. Чăваш чĕлхин орфографи словарĕ. Вăтам шкул валли. – Шупашкар, 1991.
9. Чувашское слово. Учебное пособие для углубленного изучения чувашского языка. Для учащихся техникумов, профтехучилищ и средних школ. – Чебоксары, 1994.
10. Орфографический словарь чувашского языка. Для 1-4-х классов. – Чебоксары, 1995.
11. Краткий словарь синонимов и антонимов чувашского языка. Для начальной школы. – Чебоксары, 1995.
12. Краткий фразеологический словарь. Для средней школы. – Чебоксары, 1995 (в соавт.).
13. Словарь лингвистических терминов чувашского языка. Для учащихся средней школы. – Чебоксары, 1996 (в соавт.).
14. Словарь омонимов. Для средней школы. – Чебоксары, 1996.
15. В мире слов. Для учащихся средней школы. – Чебоксары, 1997 (в соавт.).

16. Тематический русско-чувашский словарь. Для 1-4-х классов русских школ. – Чебоксары, 1998 (в соавт.).
17. Чувашский язык. Учебник для второго класса. – Чебоксары, 2002 (в соавт.).

*Аслă шкул валли:*

1. Диалектологический словарь чувашского языка. – Чебоксары, 1968.
2. Чăваш чĕлхин вырăнти калаçăвĕсем. – Шупашкар, 1969.
3. Чăваш чĕлхин тӳнтер словарĕ. – Шупашкар, 1985 (в соавт.).
4. Чувашский язык. Учебник для вузов. – Чебоксары, 1988 (в соавт.).
5. Старочувашская письменность. Учебное пособие для ЧГУ. – Чебоксары, 1988.
6. Чăваш чĕлхи методикин ыйтăвĕсем. – Шупашкар, 1989.
7. Чувашский язык. Учебное пособие для студентов пединститута. – Чебоксары, 1991 (в соавт.).
8. Чувашская диалектология. Учебник для вузов. – Чебоксары, 1992.
9. Обучение деловому письму. Учебное пособие. На чув. яз. – Чебоксары: ЧГУ, 1993.
10. Чувашский язык. Справочник. – Чебоксары, 1994.
11. Русско-чувашский словарь. – Чебоксары, 1999 (в соавт.).
12. Грамматические синонимы. Пособие-справочник для студентов. – Чебоксары, 2000 (в соавт.).
13. Словарь лингвистических терминов чувашского языка. Издание 2-ое. – Чебоксары, 2000 (в соавт.).
14. Методика чувашского языка. – Чебоксары, 2002 (в соавт.).
15. Чувашская диалектология. II. Хрестоматия. – Чебоксары, 2002.
16. Чувашская диалектология. I. Учебное пособие. – Чебоксары, 2003. На чув. языке.
17. Чувашский язык. Энциклопедический словарь. В двух томах. – Чебоксары, 2003. На чув. языке.
18. Первые печатные грамматики чувашского языка. Учебное пособие. – Чебоксары, 2003. На чув. языке.
19. Япала ячĕ. Вĕренӳ пособийĕ. – Шупашкар, 2004.

20. Паллă ячĕ. Хисеп ячĕ. Местоимени. Вĕренӳ кĕнеки. – Шупашкар, 2004.

17. **Сироткин Михаил Яковлевич**, филол. наукисен докторĕ, профессор

*Шкул валли:*

1. Букварь и первая книга по русскому языку. Для 2-го класса. – Чебоксары: Чувашгосиздат, 1941-1951 (в соавт.).
2. Книга для чтения по русскому языку. Для 5-го класса чувашских школ. – Чебоксары: Чувашгосиздат, 1940 (в соавт.).
3. Учебник русского языка. Для 4-го класса. – Чебоксары: Чувашгосиздат, 1940-1953.
4. Чăваш литератури. Вăтам шкулăн 10-мĕш класĕнче вуламалли кĕнеке. – Шупашкар: Чăвашиздат, 1964-1987.
5. Чăваш литератури. 9-мĕш класра вĕренмелли кĕнеке. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1962–1986.
6. Чăваш литератури. 8-мĕш класра вĕренмелли кĕнеке. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1956–1986.
7. Тăван литература. 7-мĕш класс валли хрестомати. – Шупашкар: Чăвашгосиздат, 1938–1972.
8. Тăван литература. 6-мĕш класс валли хрестомати. – Шупашкар: Чăвашгосиздат, 1936–1959.
9. Чăваш литератури. Вăтам шкул валли. 5-мĕш класс. – Шупашкар: Чăваш патшалăх изд-ви, 1936–1970.

*Аслă шкул валли:*

1. Очерки дореволюционной чувашской литературы. – Чебоксары: Чувашгосиздат, 1948, 1967.
2. Чăваш литератури (Октябрь революцийĕчченхи тапхăр). Хрестомати. – Шупашкар, 1951.
3. Очерк истории чувашской советской литературы / Под ред. доктора филол. наук М.И. Фетисова. – Чебоксары: Чувашгосиздат, 1956.
4. Чувашский фольклор. Очерк устно-поэтического народного творчества. – Чебоксары: Чувашгосиздат, 1969.

18. **Федоров Георгий Иосифович**, филол. наукисен докторĕ, профессор

*Шкул валли:*

1. Чăваш литератури. Хрестомати. Вăтам шкулăн 11-мĕш класĕ валли. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2002.
2. Чăваш литератури. Вĕренӳ кĕнеки. Вăтам шкулăн 11-мĕш класĕ валли. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2003.

*Аслă шкул валли:*

1. Чăваш литератури (1945-1985 çулсем). Вĕренӳ пособийĕ. – Шупашкар, 2004.

19. **Филиппова Дарья Семеновна**, пед. наукисен кандидачĕ, доцент

*Шкул валли:*

1. Тăван литература. 5-мĕш класс валли. – Шупашкар: Чăваш АССР кĕн. изд-ви, 1961–2000.

*Аслă шкул валли:*

1. Чăваш литератури вĕрентессин хăш-пĕр ыйтăвĕсем. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1989 (авт. пĕрле).

20. **Чернов Мефодий Федорович**, филол. наукисен докторĕ, профессор

*Аслă шкул валли:*

1. Краткий русско-чувашский фразеологический словарь. – Чебоксары: Чувашкнигоиздат, 1975.
2. Обособленные члены предложения в современном чувашском языке. - Чебоксары: Чувашкнигоиздат,1963.
3. Русско-чувашский фразеологический словарь. – Чебоксары: Изд-во ЧГУ, 2003.
4. Фразеология современного чувашского языка. – Чебоксары: Чув. кн. изд-во, 1985.

21. **Юшков Сергей Павлович**, филол. наукисен кандидачĕ, доцент

*Шкул валли:*

1. Тăван сăмах. 2-мĕш класс валли. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1986, 1990.
2. Тăван чĕлхе. Пуçламăш шкулăн 1-мĕш класĕнче вуламалли тата чăваш чĕлхине вĕренмелли кĕнеке. 7 кăларăм. – Шупашкар, 1968.

# ПЕДУНИВЕРСИТЕТРА 1930-2004 ÇУЛСЕНЧЕ ХАТĔРЛЕНĔ ЧĂВАШ ЧĔЛХИПЕ ЛИТЕРАТУРИ УЧИТЕЛĔСЕН ПĔТĔМĔШЛЕ ЙЫШĔ

| Вĕренсе тухнă çынсен шучĕ тата вĕренÿ форми / Специальноçсем | Учительсен пĕтĕм йышĕ | Çав шутран | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | | Пединститутра тата педуниверситетра хатĕрленĕ | | | Учительсен институтĕнче | | |
| | | Пурĕ | Çав шутран | | Пурĕ | Çав шутран | |
| | | | Куçăн мелпе | Куçăн мар мелпе | | Куçăн мелпе | Куçăн мар мелпе |
| Пĕтĕмпе хатĕрленĕ | 1658 | 1338 | 1002 | 336 | 320 | 291 | 29 |
| Çав шутран: Вырăс тата чăваш чĕлхисем тата литературисем | 438 | 438 | 390 | 48 | - | - | - |
| Чăваш чĕлхипе литератури | 1220 | 900 | 612 | 288 | 320 | 291 | 29 |

# ЧӐВАШ ФИЛОЛОГИ ФАКУЛЬТЕТНЕ (УЙРӐМНЕ) КУÇӐН МАЙПА ПӖТЕРНИСЕН ШУЧӖ

(çулсем тӑрӑх)

| Çулсем | Пурӗ | Специальноçсем | |
|---|---|---|---|
| | | Чӑв. чӗлхи тата лит-ра | Чӑв. чӗлхи, лит-ра тата вырӑс чӗлхипе лит. |
| 1941 | | 19 | |
| 1942 | | 21 | |
| 1943 | | 11 | |
| 1944 | | 21 | |
| 1945 | | 32 | |
| 1946 | | 16 | |
| 1947 | | 31 | |
| 1948 | | 30 | |
| 1949 | | 59 | |
| 1950 | | 55 | |
| 1951 | | 50 | |
| 1952 | | 64 | |
| 1953 | | 25 | |
| 1954 | | 22 | |
| 1955 | | 22 | |
| 1956 | | 20 | 39 |
| 1957 | | | 17 |
| 1958 | | | 39 |
| 1959 | | | 52 |
| 1960 | | | 44 |
| 1961 | | | 45 |
| 1962 | | | 20 |
| 1963 | | | 21 |
| 1964 | | | 24 |
| 1965 | | | 34 |
| 1966 | | | 22 |
| 1967 | | | 33 |
| | | | |
| 1997 | | 42 | |
| 1998 | | 54 | |
| 1999 | | 56 | |
| 2000 | | 50 | |
| 2001 | | 51 | |
| 2002 | | 60 | |
| 2003 | | 54 | |
| 2004 | | 38 | |

# ЧĂВАШ ФИЛОЛОГИ ФАКУЛЬТЕТНЕ (УЙРĂМНЕ) КУÇĂН МАР МАЙПА ПĔТЕРНИСЕН ШУЧĔ

(çулсем тăрăх)

| Çулсем | Йышăннă | | Вĕреннĕ | | Пĕтернĕ | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| | Чăв. чĕлхи тата лит-ра | Вырăс чĕлхи тата лит., чăв. чĕлхи тата лит. | Чăв. чĕлхи тата лит-ра | Вырăс чĕлхи тата лит., чăв. чĕлхи тата лит. | Чăв. чĕлхи тата лит-ра | Вырăс чĕлхи тата лит., чăв. чĕлхи тата лит. |
| 1951 | 31 | | 75 | | 7 | |
| 1952 | 18 | | 75 | | - | |
| 1953 | 21 | | 75 | | 1 | |
| 1954 | - | | 113 | | - | |
| 1955 | - | | 92 | | 5 | |
| 1956 | - | - | 90 | 27 | 10 | - |
| 1957 | - | - | 84 | 42 | 10 | - |
| 1958 | - | - | 102 | 56 | 10 | - |
| 1959 | 31 | - | 59 | - | 37 | - |
| 1960 | - | - | 134 | 39 | 16 | 9 |
| 1961 | 30 | - | 165 | 29 | 18 | 10 |
| 1962 | 25 | - | 160 | 15 | 31 | 13 |
| 1963 | 25 | - | 140 | 15 | 10 | 1 |
| 1964 | - | 28 | 120 | 42 | 17 | 3 |
| 1965 | - | 30 | 77 | 70 | 32 | 6 |
| 1966 | - | 51 | 61 | 113 | 8 | 3 |
| 1967 | - | - | - | - | 18 | 1 |
| | | | | | | |
| 1997 | 27 | | 27 | | - | |
| 1998 | 34 | | 60 | | - | |
| 1999 | 35 | | 97 | | - | |
| 2000 | 34 | | 127 | | - | |
| 2001 | 30 | | 155 | | - | |
| 2002 | 28 | | 161 | | 32 | |
| 2003 | 21 | | 154 | | 32 | |
| 2004 | 25 | | 137 | | 40 | |
| Пурĕ | 415 | 109 | | | 334 | 46 |

# Тупмалли

«Салам, факультетăмăр». Чăваш филологи факультечĕн гимнĕ.................. 3
Вăтăрмĕш çулсем: савăнăç та, куççуль те.................. 4
Юнлă вăрçă кĕрленĕ чух.................. 13
Вăрçă хыççăнхи çĕкленӳ.................. 16
Утмăлмĕш çулсен тивлечĕ.................. 27
Ялкăшуллă чĕрĕлӳ.................. 33
Факультет малалла утать.................. 39
Чăваш уйрăмĕнче вĕреннĕ ăслăлăх докторĕсемпе профессорсем.................. 52
Тава тивĕçлĕ ятсемпе паллăсем илнĕ вĕрентӳçĕсем.................. 53
Вĕсем пирĕн патра вĕреннĕ, кайран тава тивĕçлĕ ĕçчен ятне илнĕ.................. 55
Чăваш (чăваш тата вырăс) уйрăмĕнчен вĕренсе тухнисем – вĕрентӳ кĕнекисен авторĕсем.................. 57
Педуниверситетра 1930-2004 çулсенче хатĕрленĕ чăваш чĕлхипе литература учителĕсен пĕтĕмĕшле йышĕ.................. 69
Чăваш филологи факультетне (уйрăмне) кусăн майпа пĕтернисен шучĕ (çулсем тăрăх).................. 70
Чăваш филологи факультетне (уйрăмне) кусăн мар майпа пĕтернисен шучĕ (çулсем тăрăх).................. 71

**Мефодьев А.И.**

# ФАКУЛЬТЕТ – ПИРĔН КИЛ

## ФАКУЛЬТЕТ – НАШ ДОМ

На чувашском языке

Редактор А.Е. Горшков
Технический редактор Н.Н. Яковлева
А.И. Мефодьев, Н.П. Петров, З.С. Антонова архивĕсенчи тата А.С. Абрамов хатĕрленĕ сăн ӳкерчĕксемпе усă курнă.

Подписано в печать 25.03.2005.
Формат 60x84/16. Бумага писчая. Печать оперативная.
Усл. печ. л. 4,5. Тираж 100 экз. Заказ №263.

ГОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический университет им. И.Я. Яковлева»
428000, г. Чебоксары, ул. К.Маркса, 38

Отпечатано на участке оперативной полиграфии
ГОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический университет им. И.Я. Яковлева»
428000, г. Чебоксары, ул. К.Маркса, 38

Мефодьев А.Е.

ФАКУЛЬТЕТ – ПИРĔН КИЛ

ФАКУЛЬТЕТ – НАШ ДОМ

На чувашском языке

Редактор А.Е. Горшков
Технический редактор Н.П. [illegible]

Подписано в печать 23.12.2005.
Формат 60х84/16. Бумага писчая. Печать оперативная.
Усл. печ. л. 4,5. Тираж 100 экз. Заказ №2653.

ГОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический
университет им. И.Я. Яковлева»
428000, г. Чебоксары, ул. К.Маркса, 38.

Отпечатано на участке оперативной полиграфии
ГОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический
университет им. И.Я. Яковлева»
428000, г. Чебоксары, ул. К.Маркса, 38.









ЧĂВАШ ЧĔЛХИ 5
ЧĂВАШ АХĔ 1
ЧĂВАШ ЧĔЛХИ 2
ЧĂВАШ ЧĔЛХИ
ЧĂВАШ САМАХĔ 4
ЧĂВАШ САМ
ЧĂВАШ ЧĔЛХИ